ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чӑваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чӑваш АССР Верховнӑй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаҫачĕ

1953 ҫул Январь 11
ВЫРСАРНИКУН
№ 7 (8916)

35-мĕш ҫул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Союзĕ тӑрӑх (1 стр.).
Вырӑнти Советсен суйлавĕ умĕн (1 стр.).
Н. А. Некрасова асӑнса (1 стр.).
Г. Матвеев.—Пиллĕкмĕш тинĕс (2 стр.).
Ĕҫсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕ йышӑннӑ решени. Ĕҫсынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕҫлекен участоксенчи суйлав комиссисен составне ҫирĕплетесси ҫинчен (3—4 стр.).
Корейӑри ĕҫсем (4 стр).
Кӑнтӑр Корейӑри халӑх вырӑпа асапланать (4 стр.).
Корейӑри ĕҫсыннисем И. В. Сталинӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенине вĕренеҫҫĕ (4 стр.).
Китай Халӑх Республики тунӑ ҫитĕнӳсем (4 стр.).
Специалистсем вĕрентсе хатĕрлеҫҫĕ (4 стр.).
Демократиллĕ Германи Республикинчи общественность Некрасова хисеплесе асӑнать (4 стр.).
Индире Америка пропагандине хирĕҫ тӑраҫҫĕ (4 стр.).

ХИСЕП ХĂМИ

«Чӑвашвӑрман» трест тата ĕҫсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем тӑратнӑ тӑрӑх кĕркуннепе хĕллехи вӑхӑтра вӑрман хатĕрлемелли плана срокчен тата ирттерсе тултарнӑшӑн республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫак колхозсене кĕртнĕ:

КОМСОМОЛЬСКИ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Мичурин ячĕпе тӑракан колхоз (председателĕ **И. Таллеров** юлташ, пуҫламӑш парторганизаци секретарĕ **С. Михайлов** юлташ, вӑрман хатĕрлекен бригадӑн бригадирĕ **С. Гладков** юлташ). Колхоз 1953 ҫулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне йывӑҫ касса хатĕрлемелли плана 110 процент, турттарса кӑлармалли плана 113,5 процент тултарнӑ.

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ

2. **«Правда»** колхоз (председателĕ **В. Тимофеев** юлташ, пуҫламӑш парторганизаци секретарĕ **А. Яковлев** юлташ). Колхоз йывӑҫ касса хатĕрлемелли плана 100,4 процент, каснӑ йывӑҫа ҫул хĕррине илсе тухмалли плана 105,2 процент, турттарса кӑлармалли плана 103,5 процент тултарнӑ.

Вырӑнти Советсен суйлавĕ тата агитациллĕ ĕҫ

Ĕҫсынни депутачĕсен вырӑнти Советĕсен суйлавне хатĕрленес ĕҫ кашни кунах вӑйланса пырать. Суйлавсем совет ҫыннисен политикӑллӑ тата производствӑллӑ хастарлӑхĕ пĕрмай ӳссе пынӑ тапхӑрта иртеҫҫĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем, аслӑ ҫулпуҫ И. В. Сталин юлташ съездра каланӑ сӑмах тата унӑн гениллĕ ҫĕнĕ произведенийĕ совет халӑхĕн вӑйне малалла аталантармалли хӑватлӑ ҫӑлкуҫĕ пулса тӑчĕҫ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци социализмран майĕпен коммунизма куҫмалли сталинла программӑна ӑнӑҫлӑ пурнӑҫлаҫҫĕ, пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллӑх плана срокчен тултарассишĕн пĕтĕм вӑй парса кĕрешеҫҫĕ.

Ҫитес суйлавсене ирттерме хатĕрленнĕ кунсенче парти организацийĕсен, агитациллĕ тата пропагандӑллӑ ĕҫе анлӑн туса пырса, партипе халӑх хушшинчи ҫыхӑнӑва ытларах ҫирĕплетессишĕн тӑрӑшас пулать. Хальхи вӑхӑтри политикӑллӑ-массӑллӑ ĕҫ совет ҫыннисене коммунистсен партийĕпе Совет правительствин политикине тарӑнрах ӑнланса илме, халӑха Ленин—Сталин партийĕ тавра тачӑрах пĕтĕҫтерме, массӑсене партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсене пурнӑҫлассишĕн кĕрешме мобилизацилемелле.

Парти организацийĕсен тĕп задачи вӑл—ĕҫсыннисен кĕрешӗвне пуҫарса ертсе пырасси. Ертсе пырас тени ҫакна пĕлтерет, тесе вĕрентет Сталин юлташ: **«...парти политики тĕрĕс пулнине массӑсене ӑнентерсе пыма пĕлмелле, массӑсене парти позицийĕсем патне ҫитерсе тӑракан тата вĕсене хӑйсен опычĕ тӑрӑх парти политики тĕрĕссине пĕлсе ҫитме пулӑшакан лозунгсене кӑларса тӑратса пурнӑҫа кĕртсе пымалла, массӑсене парти ӑнланулӑхĕн шайĕ таран ҫĕклемелле, ҫапла вара, массӑсенчен пулӑшу илсе тӑрассине, вĕсене татӑклӑ кĕрешӗве тухма хатĕрлесе ҫитерессине ĕҫе кĕртсе пымалла».**

И. В. Сталин юлташӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ ҫĕнĕ произведенийĕ, аслӑ ҫулпуҫ съездра каланӑ историллĕ сӑмах тата партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем ҫинчен массӑсене тĕплĕн ӑнлантарса парасси агитациллĕ-массӑллӑ ĕҫре тĕп вырӑн йышӑнмалла.

Республикӑри нумай парторганизацисем суйлав кампанийĕ пуҫлансанах политикӑллӑ агитацие анлӑн туса пыма тытӑнчĕҫ. Шупашкарти Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлӑ заводри агитколлектив цехсенче, ҫавӑн пекех парторганизаци ҫумне ҫирĕплетнĕ суйлав участокĕсенче политикӑллӑ агитацие вӑйлатса пырать. Агитаторсем хӑйсем ирттерекен калаҫусенче завод, хула, республика тата ҫĕршыв умĕнче тӑракан задачӑсем ҫинчен тĕплĕн калаҫа параҫҫĕ.

Етĕрне районĕнчи Кӑташри агитпункт пысӑк ĕҫ тӑвать. Кунти агитаторсем суйлавҫӑсемпе тӑтӑшах тĕл пулаҫҫĕ, вĕсемпе калаҫусем ирттереҫҫĕ.

Кун пек паха тĕслĕхсем нумай. Ҫапах та чылай парторганизацисем суйлав умĕнхи политикӑллӑ агитацие кирлĕ пек туса пымаҫҫĕ. Политикӑллӑ агитацин хӑватлӑ вӑйĕпе усӑ курма пĕлменни КПСС Чурачӑк райкомĕн ĕҫĕнче уйрӑмах хытӑ палӑрать. Суйлав участокĕсенчи агитпунктсенчен пĕри те тивĕҫлипе ĕҫлеме тытӑнман, вĕсем ĕҫе тытӑнма та пултараймаҫҫĕ, мĕншĕн тесен агитпунктсен заведующисем пулма ҫынсем тупса партман. Парти райкомĕ агитаторсемпе ĕҫлемест, вĕсене паянхи задачӑсем ҫинчен ӑнлантарса памасть.

Сĕрпӳ районĕнче те ĕҫсем чаплӑ мар. Районти суйлав участокĕсем ҫумĕнче пуриче те агитпунктсем тунӑ, анчах вĕсенчен нумайӑшĕ халлĕхе массӑллӑ-политикӑллӑ ĕҫĕн центрĕ пулса тӑман. Культурӑпа сутӗҫ учрежденийĕсем суйлав кампанине активлӑ хутшӑнмаҫҫĕ. Уйрӑм вулав ҫурчĕсемпе библиотекӑсем халĕ те хупӑ тӑраҫҫĕ.

Ҫавнашкал ҫитменлĕхсене текех чӑтса тӑма ҫук. Политикӑллӑ агитацие анлӑн сарса яма мĕн кирлĕ, ҫавсене парторганизацисен пĕтĕмпех туса хурас пулать. Пуринчен малтан агитколлективсене ҫирĕплетмелле, вĕсен ĕҫне куллен ертсе пымалла, агитколлектив руководителĕсем валли семинарсем тата инструктивлӑ канашлусем ирттермелле. Кашни суйлав участокĕнчех агитпункт пулмалла, унта ĕҫлеме политика тĕлĕшĕнчен лайӑх хатĕрленнĕ тата опытлӑ агитаторсемпе пропагандистсене уйӑрмалла, вулавҫӑсемпе калаҫу ирттерекенсен йышĕ те пысӑк пулмалла.

Политикӑллӑ агитаци ӑнӑҫлӑ пуласси, ытти ĕҫсенчи пекех, кадрсенчен—агитаторсенчен, вĕсем суйлавҫӑсене пирĕн парти умĕнче тӑракан задачӑсене, партипе правительство политикине лайӑх ӑнлантарса пама пĕлнинчен килет. Агитатор ирттерекен калаҫу интереслӗ пулмалла, вӑл итлекенсене хумхантарса хавхалантарма пултартӑр. Агитатор е пропагандист ирттернĕ калаҫӑва итленĕ хыҫҫӑн, кашни ĕҫсынни: манӑн ыранхи ĕҫ паянхинчен тухӑҫлӑрах пулмалла, тетĕр.

Агитаторсене вĕрентесси, вĕсен политикӑллӑ пĕлĕвĕпе идейӑллӑ тавракурӑмне ӳстересси парторганизацисен тивĕҫĕ пулса тӑрать. Агитаторсемпе тӑтӑшах семинарсем, пухусем ирттерес пулать. Вĕсенче политикӑллӑ докладсемпе лекцисем туса панипе пĕрлех, агитаторсене ĕҫри паха опытпа паллаштармалла, политикӑллӑ агитацие йĕркелеме вĕрентмелле.

Агитпункт массӑллӑ-политикӑллӑ ĕҫĕн центрĕ пулса тӑрать пулин те, агитациллĕ ĕҫе агитпунктра ирттернипе кӑна ҫырлахмалла мар. Суйлавҫӑсемпе килте, вĕсем пурӑнакан ҫуртсенче ĕҫлесси ҫине тимлĕрех пӑхас пулать. Политикӑллӑ агитацин пур формисемпе те анлӑн усӑ курни кирлĕ. Докладсем, лекцисем, калаҫусем ирттернипе пĕрлех, агитациллĕ ĕҫре хаҫат-журналсем, илемлĕ литература, кино тата радио, вырӑнти пичет, лозунгсемпе плакатсем, диаграммӑсемпе витринӑсем тивĕҫлĕ вырӑн йышӑнмалла. Агитаторсемпе пропагандистсен сӑмахĕсем совет ҫыннисем пурӑнакан тата ĕҫлекен пур вырӑнсенче те йыхрав пек янраса тӑччӑр.

Политикӑллӑ агитаци, ӑна коммунизм строительствин конкретлӑ задачисемпе тачӑ ҫыхӑнтарсан кӑна, хӑйĕн тĕллевне пурнӑҫлать. Кашни докладпа лекцире тата калаҫура колхоз е предприяти, бригада е ĕҫ участокĕ, районпа республика умĕнче тӑракан ĕҫсем ҫинчен каласа парас пулать.

Вырӑнти Советсен суйлавĕсене ирттерме хатĕрленнĕ кунсенче пичет умĕнче те пысӑк задачӑсем тӑраҫҫĕ. Районти тата хулари хаҫатсен суйлава хатĕрленес ĕҫ мĕнле пынине пĕлсе ҫутатас пулать. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене, И. В. Сталин юлташӑн ҫĕнĕ произведенине пропагандӑласси тĕп вырӑнта пулмалла. Агитпунктсен, агитаторсен опытне пĕтĕҫтерсе сарни кирлĕ. Колхозсемпе предприятисен, хуласемпе районсен ҫитĕнĕвĕсене, производство новаторĕсен ҫĕнтерĕвĕсене анлӑн кӑтартса памалла. Кунпа пĕрлех ĕҫри ҫитменлĕхсене хӑюллӑн критиклесе, вĕсене пĕтерме парторганизацисене куллен пулӑшмалла.

Ĕҫсынни депутачĕсен вырӑнти Советĕсен суйлавĕ политикӑллӑ пысӑк ĕҫ. Ӑна ӑнӑҫлӑ ирттересси парторганизацисен, кашни коммунистӑн тивĕҫĕ пулса тӑрать. Ĕҫсыннисем хушшинче политикӑллӑ агитацие куллен туса пынипе, парторганизацисен ĕҫсыннисене пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллӑх плана ирттерсе тултарма мобилизацилемелле, суйлавҫӑсене пурне те суйлава хутшӑнтармалла.

Совет Союзĕ тӑрӑх

Ново-Краматорскри Сталин ячĕпе тӑракан завод коллективĕ (Сталино облаҫĕ) коммунизмӑн аслӑ стройкисене экскаваторсем тата запаслӑ пайсем туса парать.

ӲКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: экскаваторӑн 15 кубометр тӑпра чавса илекен куркине пухаҫҫĕ. В. К. Полозов (сулахайри) тата Ф. С. Богонос слесарьсем ĕҫре.

И. БОНДАРЕНКО фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Аслӑ шкулсенчи экзаменсем

Ҫĕршыври аслӑ шкулсенче хĕллехи экзаменсем пыраҫҫĕ.

Мускаври М. В. Ломоносов ячĕпе тӑракан университетра 16 пин студент ытла экзамен параҫҫĕ. Вĕсен шутĕнче заочниксем те пур. Студентсемпе студенткӑсем политикӑллӑ экономи, вырӑс чĕлхи, литература, физика, хими, истори, биологи тата ытти предметсене лайӑх пĕлнине кӑтартса параҫҫĕ.

Январĕн 4-мĕшĕнче, вырсарникун, Мускаври В. Р. Вильямс ячĕпе тӑракан институтра гидромелиораци факультечĕн 3-мĕш курсĕнче вĕренекен студентсем электротехника тата сооруженисем тӑвас ыйтупа экзаменсем пана. Ҫав факультетри 4-мĕш курсра вĕренекенсем—урӑх халӑхсен чĕлхипе экзамен панӑ. Институтӑн вис͡ĕ факультетĕнче шыв хуҫалӑхĕ енĕпе ĕҫлеме инженерсем вĕрентсе хатĕрлеҫҫĕ. Институтра 2 пин ҫынна яхӑн вĕренет. Вĕсем пĕчĕк тата вӑтам гидроэлектростанцисенче, Туркменири тĕп канал, Кӑнтӑр Украина тата Ҫурҫĕр Крым каналĕсем ҫинче ĕҫлеме хатĕрленеҫҫĕ.

Горький хулинчи А. М. Горький ячĕпе тӑракан педагогика институтĕнче 2.078 ҫын, Свердловскри педагогика институтĕнче — 1.500 ҫын, Хусанти педагогика институтĕнче 1.946 ҫын экзамен параҫҫĕ.

Хĕллехи сессире мĕн пурĕ 1.400 пин студент экзамен параҫҫĕ, вĕсем ҫĕршыври кӑнтӑрла тата каҫхине ĕҫлекен аслӑ шкулсенче, заочно вĕренмелли аслӑ шкулсенче вĕренеҫҫĕ. (ТАСС).

СССР Наука академийĕнче

И. В. Сталинӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенийĕ тӑрӑх пухнӑ наукӑллӑ сесси

Январĕн 7-мĕшĕнче Мускавра И. В. Сталин юлташӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенийĕ тӑрӑх пухнӑ наукӑллӑ сесси уҫӑлнӑ. Наукӑллӑ сессие СССР Наука академийĕн экономикӑпа право отделенийĕ тата экономика институчĕ пухнӑ.

СССР Наука академийĕн обществӑллӑ наукӑсен отделенийĕн конференц-залне сесси ĕҫне хутшӑнма пин ҫынна яхӑн пухӑннӑ. Вĕсем хушшинче академиксем тата СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕсем, наука работникĕсем—экономистсем, аслӑ шкулсенчи преподавательсем, союзлӑ республикӑсенчи наука академийĕсен представителĕсем. Экономика институчĕн директорĕ СССР Наука академийĕн член-корреспонденчĕ К. В. Островитянов сессие уҫнӑ чухне каланӑ сӑмахра И. В. Сталин юлташӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенийĕ марксизм-ленинизм теорине пуянлатакан питĕ пысӑк ĕҫ пулнине палӑртнӑ.

Оратор, социализмӑн политикӑллӑ экономи теорийĕ тĕлĕшпе хӑй иртнĕ вӑхӑтра тунӑ йӑнӑшсене критиклесе, экономика институчĕ хӑйĕн ĕҫне вӑраххӑн ҫĕнетсе йĕркелесе пыни ҫинчен, критикӑпа самокритикӑна ҫителĕклĕ сӑрманни ҫинчен, совет ҫĕршывĕнчĕ экономикӑллӑ ыйтусене ҫутатса пыракан центр пулса тӑрайманни ҫинчен каланӑ.

Островитянов юлташ ҫакна палӑртнӑ: И. В. Сталин юлташ произведенийĕнчен тухса тӑракан ыйтусем тĕлĕшпе творчествӑллӑ ĕҫсем туса пымалла, социализмӑн политикӑллӑ экономи ыйтӑвĕсем тӑрӑх, социализмран коммунизма куҫас ыйту тӑрӑх, ҫавӑн пекех тата хальхи вӑхӑтри капитализма тĕпчесе пĕлес тĕлĕшпе наукӑллӑ ĕҫсем туса пымалла. Ҫакӑн пек ĕҫсем И. В. Сталин юлташӑн гениллĕ ĕҫне пурне те ӑнлантарса пама пулӑшмалла. Экономика институчĕн парти активне, хуҫалӑх ĕҫĕнчи работниксене тата рабочисемпе колхозниксен йышлӑ массисене социализмӑн экономикӑллӑ законĕсене вĕренме пулӑшас шутпа, ҫав законсемпе коммунизм строительствинче усӑ курма пулӑшас шутпа кĕнекесем ҫырса пичетлесе кӑлармалла.

— Совет ҫĕршывĕнчи экономистсен,— тесе каланӑ оратор,—эпир пурӑнакан вӑхӑтри чи аслӑ ученӑй Сталин юлташ ҫырнӑ гениллĕ произведенипе усӑ курса, хамӑр ҫĕршывра хуҫалӑх ĕҫĕсене туса тӑракан кадрсене тата коммунизм строителĕсен миллионшар ҫынлӑ массисене, ҫавӑн пекех тата урӑх ҫĕршывсенчи ĕҫсыннисене обществӑн экономикӑллӑ аталану законĕсене тĕрĕс ӑнланма вĕрентмелле.

Сессире экономикӑллӑ наукӑсен кандидачĕ Ф. В. Самохвалов «И. В. Сталинӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенийĕ—марксистла-ленинла политикӑллӑ экономи аталанӑвĕнчи ҫĕнĕ тапхӑр» темӑпа доклад тунӑ.

В. С. Немчинов академик «И. В. Сталин производствӑллӑ хутшӑнусем производительнӑй вӑйсен характерĕпе обязательно килĕшсе тӑмалли экономикӑллӑ закон ҫинчен» темӑпа доклад тунӑ.

(ТАСС).

Коммунизмӑн аслӑ стройкисенче

НОВАЯ КАХОВКА. Каховка гидроэлектростанцине тӑвакансен кӑҫалхи пĕрремĕш квартала, гидроузелӑн тĕп сооруженийĕсене тума пуҫласа, ҫур миллион кубометр ытла бетон хумалла. Днепр айлӑмĕнче бетон хума хатĕрленес ĕҫе хӑвӑртрах туса ҫитерессишĕн социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса пырать.

Бетон хатĕрлеме тата ӑна кирлĕ ҫĕре хума ҫĕршер пин кубометр вак чулпа хӑйӑр, пиншер тонна арматура тимĕрĕ кирлĕ пулать. Запорожьепе Евпаторирен, Днепр тӑрӑхĕнчи тата Донбасри заводсенчен килекен вуншар эшелонсемпе ҫав материалсене илсе килеҫҫĕ. Малтанхи эшелонсем аслӑ стройкӑна килсе ҫитнĕ. Суднӑсем иртсе ҫӳремелли шлюз тунӑ ҫĕрте чи малтан бетон хума пуҫлаҫҫĕ.

Каховка гидроэлектростанцине тӑвакансем гидростанцие срокчен ĕҫе ярассишĕн ӑмӑртаҫҫĕ. Стройкӑра задание 1,5—2 хут тултарман бригадӑсем ҫук.

ВОЛЖСКИЙ (Сталинград облаҫĕ). Сталинград гидроэлектростанцине тунӑ ҫĕрте ĕҫ сарӑлсах пырать. Хӑйӑрлӑ утрава ҫуркунне Атӑл шывĕ илсерен сыхлама перемычка тӑваҫҫĕ. Ҫĕнĕ ҫул пуҫланнӑ кунсенче ҫак перемычкӑна тунӑ ҫĕрте хурҫӑ юпасем ҫапса лартма тытӑннӑ. Ҫурkунне шыв тулма пуҫличчен механизаторсен пилĕк пине яхӑн хурҫӑ юпа ҫапса лартмалла.

Симĕс утрав районĕнче пристань тӑваҫҫĕ. Атӑл ҫинче навигаци пуҫлансан илсе килмелли материалсемпе оборудование ҫак пристаньре пуштатмалла пулать.

Хĕллехи вӑхӑтра ĕҫлеме йывӑр пулин те, 321-мĕш земснаряд экипажĕ ӑнӑҫлӑ ĕҫлет. Гидромеханизаторсем ҫĕнĕ ҫулӑн малтанхи кунĕсенче 50 пин кубометра яхӑн тӑпра чавса кӑларнӑ.

Атӑлпа Урал хушшинче канал тунӑ ҫĕрте механизаторсен комплекслӑ бригади ӑнӑҫлӑ ĕҫлет,— ҫак бригадӑна Социализмлӑ Ĕҫ Геройĕ Дмитрий Слепуха пуҫарнипе тунӑ. Бригадӑри экскаваторщиксем тата автосамосвалсемпе тӑпра турттаракан шоферсем нормӑна нумай ирттерсе тултараҫҫĕ.

Январĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС).

Вырӑнти Советсен суйлавĕ умĕн

Ĕҫсыннисен представителĕсем

Ĕҫлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлӑ заводра ĕҫлекенсен пухӑвĕ политикӑллӑ пысӑк ҫĕкленӳпе иртрĕ. Конструкторсен уйрӑмĕнчи парторганизаци секретарĕ Долина юлташ хулари 14-мĕш участокри суйлав комиссине кĕртме М. М. Ардаматская конструктора уйӑрма сĕнчĕ. Унӑн сĕнĕвне пуху ырласа йышӑнчĕ.

Тата ҫак юлташсене суйлав комиссийĕсенче ĕҫлеме кандидата тӑратрĕҫ: электроцехри С. А. Бирюков стахановеца, чи лайӑх токаре Ф. З. Захарова, сборочнӑй цехри чи лайӑх стахановеца В. Г. Данилова, заводри новатора В. А. Босляксва, главнӑй бухгалтерире ĕҫлекен Л. А. Трифоновӑна.

В. КИТАХ.

* * *

Январĕн 7-мĕшĕнче Чӑваш АССР Финанс министерствинче ĕҫлекенсен пухӑвĕ пулчĕ. Пуху участокри суйлав комиссине кандидат тӑратас ыйтӑва пӑхса тухрĕ.

Пухура чи малтан Скворцов юлташ сӑмах илчĕ. Вӑл министерство коллективĕнчен участокри суйлав комиссине Анна Прокопьевна Демидова юлташа уйӑрма сĕнчĕ.

Демидова юлташ ĕҫе тӳрĕ кӑмӑлпа туса пыни, комиссире ĕҫлеме тивĕҫлĕ ҫын пулни ҫинчен ытти юлташсем те каларĕҫ.

Пуху Шупашкарти 7-мĕш суйлав участокĕнчи комиссинче ĕҫлеме Демидова юлташа уйӑрчĕ.

Н. ЯСНОПОЛЬСКИЙ.

Суйлавҫӑсем хушшинчи калаҫусем

Чуманкассинчи агитпунктра халӑх йышлӑ. Колхозниксем ҫĕнĕ хаҫатсем вуларĕҫ. Унтан хӑйсем хушшинче пĕр-пĕринпе калаҫма пуҫларĕҫ.

— Партин XIX-мĕш съезчĕ пиллĕкмĕш пилĕк ҫуллӑх план тĕлĕшпе панӑ директивӑсене пурнӑҫланӑ май чӑваш халӑхĕн пурнӑҫĕ те лайӑхланнӑҫемĕн лайӑхланса пырать. Шупашкар гидроэлектростанцине туни республикӑн сӑн-сӑпатне тĕпренех улӑштарĕ,— тет колхоз бригадирĕ Федоров юлташ.

— Пурнӑҫ улшӑнса пынине хамӑр колхоз пурнӑҫĕнчен те лайӑх курма пулать. Пирĕн колхоз ҫултан-ҫул хуҫалӑхпа организаци тĕлĕшĕнчен тĕрекленсе пырать. Иртнĕ ҫулта кашни гектартан ҫĕр пӑта яхӑн тĕштырӑ пухса кĕртнĕ. Выльӑх-чĕрлĕх йышĕпе тухӑҫлӑхне ӳстерес тĕлĕшпе ҫĕнĕ ӳсĕмсем тунӑ. Колхозниксене ĕҫкунĕ пуҫне 2-шер килограмм тырӑ тата ҫĕрулмипе пахча ҫимĕҫ чылай валеҫсе панӑ. Кӑҫал акӑ радиоузел лартрӑмӑр. Ҫитес ҫул колхозниксен килĕсене Ильич лампи ҫутатма пуҫлĕ,— тет, калаҫӑва хутшӑнса, колхозри парторганизаци секретарĕ А. Орлов юлташ.

Агитаторсем суйлавҫӑсене район тата ял ӳсĕмĕсемпе паллаштараҫҫĕ. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсем ҫинчен, Сталин юлташӑн «ССР Союзĕнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ произведенийĕ тӑрӑх калаҫусем ирттереҫҫĕ.

Ялти лектори час-часах лекцисемпе докладсем ирттерет. Ҫак кунсенче ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкул директорĕ И. Вязов юлташ «ССР Союзĕнчи суйлав системи—тĕнчери чи демократиллĕ система» темӑпа лекци вуласа пачĕ.

Клуб ҫумĕнче 7 кружок ĕҫлет. Вĕсем 100 ҫынна яхӑн пĕрлештерсе тӑраҫҫĕ. Кружоксем суйлавҫӑсене концертсем, спектакльсем кӑтартаҫҫĕ. Ялти библиотека вулакансен конференцийĕсене ирттерет.

П. СЕМЕНОВ.

Муркаш районĕ.

Учительсен активлӑхĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Штанашри агитпунктра кашни кунах калаҫусем тата докладсем пулаҫҫĕ. «Сталинла Конституци — чи демократиллĕ Конституци» темӑпа Леонтьева учительница, Сталин юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тухса каланӑ сӑмах ҫинчен Авдеев юлташ докладсем туса пачĕҫ.

Эрнере пĕрре ҫамрӑк суйлавҫӑсен савӑнӑҫлӑ каҫĕ пулать. Викторов учитель «Совет влаҫĕ ҫамрӑксене мĕн пачĕ?» темӑпа калаҫу ирттерчĕ, Никитин юлташ вырӑнти Советсене суйламалли положени ҫинчен ӑнлантарчĕ.

Шкулти учительсемпе вĕренекенсем, ҫывӑхри ялсене йĕлтĕрпе кайса, суйлавҫӑсем хушшинче калаҫусем ирттерчĕҫ, Пигильдин юлташ ертсе пынипе концерт лартса пачĕҫ. Концерт умĕн Тихонова учительница совет гражданĕсен прависем ҫинчен доклад турĕ.

В. МАРТЫНОВ.

В. И. Ленин вилнĕренпе 29 ҫул тултарнӑ май лекцисем, докладсем, калаҫусем ирттермелли

ТЕМАТИКА

1. В. И. Ленин пурнӑҫĕпе ĕҫĕсем.
2. Ленин—Коммунистсен партине туса хураканĕ тата унӑн ҫулпуҫĕ.
3. Ленин—тĕнчери пĕрремĕш социализмлӑ государствӑна туса хураканĕ тата унӑн руководителĕ.
4. Ленин—наукӑн аслӑ корифейĕ.
5. Ленинпа Сталин хушшинчи аслӑ туслӑх.
6. 29 ҫул Ленинсӑр, Сталин юлташ ертсе пынипе, Ленин ҫулĕпе.
7. Ленинизм — ĕҫсыннисене коммунистла воспитани памалли никĕс.
8. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—совет обществин ертсе пыракан вӑйĕ, Совет Союзĕнчи коммунизм строительствин хавхалантараканĕпе организаторĕ.
9. Ленинизм—пĕтĕм тĕнчери ĕҫсыннисен миршĕн, демократишĕн, социализмшӑн кĕрешмелли ялавĕ.

КПСС ЧĂВАШ ОБКОМĔН ПРОПАГАНДӐПА АГИТАЦИ ПАЙĔ.

Н. А. Некрасова асӑнса

Январĕн 8-мĕшĕнче Николай Алексеевич Некрасов вилнĕренпе 75 ҫул ҫитрĕ. Ҫак куна пирĕн ҫĕршыври мĕнпур ĕҫсыннисем паллӑ турĕҫ.

Государствӑн Мускаври П. И. Чайковский ячĕпе тӑракан консерваторийĕн пысӑк залне совет культурин деятелĕсем, столицӑри предприятисенчи стахановецсем, вĕренекен ҫамрӑксем, поэт ĕҫлесе пурӑннӑ Ярославль облаҫĕнчи ĕҫсыннисен представителĕсем пухӑннӑ.

Сцена ҫинче—шалта Н. А. Некрасовӑн пысӑк портречĕ, ӑна чечексемпе илемлетнĕ.

Савӑнӑҫлӑ ларӑва ҫак паллӑ куна уявласа ирттерме уйӑрнӑ комисси председателĕ Сталинла премин лауреачĕ поэт М. Исаковский кĕске сӑмах каласа уҫнӑ.

Н. А. Некрасов пурнӑҫĕпе творчестви ҫинчен филологи наукисен кандидачĕ В. Друзин доклад тунӑ.

Доклад хыҫҫӑн пысӑк концерт пулнӑ. Унта столицӑри искусство мастерĕсем, радиоинформаци комитечĕн хорĕ тата ССР Союзĕн симфониллĕ оркестрĕ хутшӑннӑ. Некрасов сӑввисем тӑрӑх ҫырнӑ юрӑсене юрласа панӑ, унӑн поэмисемпе сӑввисен сыпӑкĕсене вуланӑ тата вырӑс классикĕсен музыка произведенийĕсене выляса тата юрласа кӑтартнӑ. (ТАСС).

* * *

Январĕн 8-мĕшĕнче Чӑваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ Чӑвашсен государство филармони залĕнче вырӑссен аслӑ поэчĕ Н. А. Некрасов вилнĕренпе 75 ҫул тултарнине асӑнса пысӑк вечер-концерт ирттерчĕ. «Н. А. Некрасов—революциллĕ демократин аслӑ поэчĕ» тема тӑрӑх Чӑваш совет писателĕсен Союзĕ ҫумĕнчи вырӑс поэзийĕн секци руководителĕ И. Пиняев поэт доклад туса пачĕ. Доклад хыҫҫӑнхи концертра Чӑваш халӑх поэчĕ Яков Ухсай тата Уйӑп Мишши, Стихван Шавлы, Александр Алга поэтсем Некрасов ҫырнӑ «Ял—ĕҫ ҫинче», «Пахчаҫ», «Чаплӑ ҫурт умĕнче шухӑша кайса тӑни», «Атӑл ҫинче», «Ватӑ Наум хуйхи» ятлӑ сӑвӑсене чӑвашла вуларĕҫ. Концертра Сталинла премин лауреачĕ Ф. М. Лукин ертсе пыракан юрӑпа ташӑ ансамблĕ те хутшӑнчĕ. Ансамбль Некрасов сӑввисем тӑрӑх вырӑс композиторĕсем ҫырнӑ юрӑсемпе романссене тата Пустыльникӑн «Нарспи» ятлӑ оперӗнчи пĕр сыпӑкне пысӑк ӑсталӑхпа юрласа пачĕ.

* * *

Республикӑри А. М. Горький ячĕпе тӑракан библиотека январĕн 8-мĕшĕнче вырӑссен аслӑ поэчĕ, революциллĕ демократ Н. А. Некрасов вилнĕренпе 75 ҫул тултарнине паллӑ туса литература каҫĕ ирттерчĕ. Некрасов пурнӑҫĕпе ĕҫĕсем ҫинчен Г. М. Чернова библиотекарь доклад туса пачĕ, 6-мĕш номерлĕ вӑтам шкулта вĕренекен Заворохин, Иванов, Корнеев, Аршинов тата ытти те Некрасовӑн «Салтак амӑшĕ Урине», «Тӑван ҫĕршыв», «Чугун ҫулĕ», «Маннӑ ял», «Чаплӑ ҫурт умĕнче шухӑшпа кайса тӑни» ятлӑ сӑввисене тата «Кама лайӑх пурӑнма Руҫ ҫĕрĕнче» поэмӑри уйрӑм сыпӑксене ҫĕкленӳллĕ кӑмӑлпа вуларĕҫ. Библиотекӑра ĕҫлекен Л. М. Ермолаевӑпа В. А. Корнилова юлташсем Некрасов сӑввисем тӑрӑх ҫырнӑ юрӑсене юрларĕҫ.

Сӗс-кантӑртан пысӑк тупӑш

ЧУРАЧӐК. Калинин ячĕпе тӑракан колхоз 1952 ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ кантӑр туса илчĕ. Государствӑна сӳс тата вӑрлӑх панӑшӑн колхоза 45.200 тенкĕ укҫа тӳлерĕҫ. Халĕ колхозниксем государствӑна планран ирттерсе пама сӳс хатĕрлеҫҫĕ.

Техникӑллӑ культурӑсем колхоза пысӑк тупӑш панине курса, колхозниксем 1953 ҫулта кантӑр акмалли ҫĕр лаптӑкне икĕ хут ытла тата тухӑҫлӑхне ӳстерме йышӑнчĕҫ. Кантӑр акма чи лайӑх ҫĕр участокĕ уйӑрнӑ, унта халĕ вырӑнти удобренисем кӑлараҫҫĕ.

П. ВЛАДИМИРОВ.

ПИЛЛĔКМĔШ ТИНĔС

Сывăх вăхăтсенчех Атăл çинче Шупашкар гидроузелне тума тытăнассĕ. Аслă юханшыва кунта Шупашкар гидростанцийĕн пĕви пӳлсе лартать, çав вырăнта ĕнтĕ этем аллипе тунă çĕнĕ тинĕс çуралать.

Шупашкар гидроузелĕ вăл—Аслă Атăл çинчи гидротехникăллă сооруженисен хăватлă пусмин пиллĕкмĕш сыпăкĕ пулать. Çак очеркăн авторĕ Пĕтĕм Союзри Гидроэнергопроект институчĕн экспедицийĕпе пĕрле пулас строительство районĕнче хăй пулса курнă.

Горькипе Шупашкар хушшинче

Пысăк пăрахут «В. Г. Короленко» пристаньрен вăрахăн уйрăлса Атăл варринче сулмаклăн çавăрнать те, анаталла шума тытăнать. Куç умне Горький хулин чаплă панорами картина сăнчи пек тухса тăрать: инçетри сăмсахран Ока шывĕ урлă çӳлĕ те вăрăм кĕпер каçать, вăл хулан икĕ пайне сыхăнтарса тăрать; Атăлăн сылтăм енче, çуртсем ларакан Подол умĕнче, пассажир пристанĕсен речĕ тăсăлса каять, чăнкă çыранра вара авалхи Чулхула кремлĕн хĕрлĕ стенисемпе башнисем курăнаççĕ. Юнашарах—чаплă «Откос» тата çыран хĕрринчи Жданов ячĕпе тăракан урам хăйĕн çĕнĕ çуртсемпе капăрланса çуталать. Кусем—хула çыннисен юратнă вырăнĕсем. Шыв хĕрринчен пуçласа Чкалов памятникĕ патне çити темиçе çĕр картлашкаллă çав тери пысăк пусма чĕнтĕрленсе хăпарать.

Пăрахут хăйĕн чуппине хăвăртлатать те кĕçех Горький хули Печера сăмсахĕ хыçне пытанса юлать. Халĕ ĕнтĕ куçа аслă шывăн ытарайми илемĕ тыткăна илет.

Атăл шывĕ, темĕнле тарăн шухăша путнă пек, лăпкăн та хăватлăн юхса выртать. Пире хирĕç таварлă пăрахутсем, улăпла танкерсемпе самоходнăй баржăсем иртеççĕ...

Тӳпери шурă пĕлĕтсен сăнĕсем, Атăлăн сăрă-сенкер шывĕ çине ӳксе, сăмăллăн хумханса выляççĕ. Горькипе Шупашкар хушшинчи виççĕр километрлă çул çинче илемлĕ те тĕлĕнмелле вырăнсем питех те нумай. Икĕ енĕпе ешĕл-симĕс бархăтпа витĕннĕ çырансем шăвăнса пыраççĕ; сулахай енĕ—сĕвек, сылтăм енĕ—çӳлĕ те чăнкă. Шыв хĕрринче ĕлĕк-авал бурлаксем утнă ансăр сукмак авкаланса выртать.

Сылтăм çыранти чи çӳлĕрех вырăнсене кунти çынсем сăртсем, теççĕ. Акă çав тери илемлĕ Фадеев сăрчĕсем. Вĕсен чăнкă тайлăмĕсем куçа вăрман ешĕллĕхĕпе е пермски системăри породăсен нумай тĕрлĕ тĕсĕсемпе илĕртеççĕ; кунта сăрă та сарă чулсем, кĕрен мергельсем, тăмсемпе хăйăрсем пĕр-пĕрипе хутăшса чăпарланаççĕ. Сăртлăх тӳпинче ялсем курăнаççĕ. Çав ялсенчи хăшпĕр çуртсене вара, юмахри ӳкерчĕксенчен касса илнĕ пекех, авалхи майлă тем тĕрлĕ те чĕнтĕрлесе, эрешлесе илемлетнĕ.

Сулахай енче, Керженец шывĕ Атăла юхса кĕнĕ çĕрте, авалхи Макарьевски монастырĕн ылтăнланă тăррисем хĕвелпе çуталса лараççĕ. Вырăс çыннисем кунта малтанхи хут XIV-мĕш ĕмĕрте килсе вырнаçнă. Атăл çинчи çынсем çак монастыре «Ватă Макар», теççĕ. Вырăс халăх историйĕнчи нумай ĕçсене хăй куçĕпе курнă «Ватă Макар», чăн та ĕнтĕ, пире тĕлĕнмелле япаласем çинчен пайтах каласа кăтартнă пулĕччĕ. Степан Разин тата Емельян Пугачев ертсе пынипе çĕкленнĕ хресчен пăлхавĕсен сулăмĕ, мĕнпур Атăл талкăшĕне сарăлса, «Ватă Макарăн» авалхи стенисем патнех çитнĕ. XVII—XVIII-мĕш ĕмĕрсенче кунта пĕтĕм Российăна илтĕнмелле Макарьевски ярмăркă кĕрлесе тăнă, кайрантарах вара ăна Чулхулана куçарнă. Вырăс çĕрĕн мĕнпур енĕсенчен—Çĕпĕртен, Атăл тăрăхĕнчен, Çурçĕртен тата Азипе Европăри кӳршĕ çĕршывсенчен кунта суту-илӳ тăвакан çынсем çав тери йышлăн пухăннă. Макарьевски ярмăркă Российăн экономикăллă аталанăвĕнче паллă вырăн йышăнса тăнă.

Тепĕр енче, пилĕк километрлă ешĕл çаран тăсăлса иртнĕ хыççăн, Фадеев сăрчĕсен тайлăмĕнче, авалхи тепĕр хула—Лысково курăнса каять. Нумай ĕмĕр авалрах кунта булгăрсен Сундавит ятлă хули пулнă, унăн йĕрĕсем—крепость валĕсем—Олень сăрчĕ çинче паянхи кунччен сыхланса юлнă.

Лысково халĕ ĕнтĕ промышленность центрĕ пулса тăнă. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче кунта автомобильсем валли электроаппаратсем тăвакан завод ӳссе çитĕннĕ. Йывăç каскалакан тата сăрă тăвакан заводсене çĕнетсе пысăклатнă.

Атăлăн сылтăм çыранĕ тăрăх, Лысковăран пуçласа Сталинграда çитиччен, улмуççи сачĕсем ешереççĕ.

Лысковăран çĕр километр аяларахра Атăла илемлĕ Сăр шывĕ юхса кĕрет. Унăн шывĕсем Жигули сăрчĕсем патĕнчен тенĕ пекех тымарланса килеççĕ. Сăр шывĕ юхса кĕнĕ çĕрте, чăнкă сăрт тайлăмĕнче, Васильсурск хули—вырăссен Атăл çинчи авалхи крепоçĕ курăнса ларать. Ку вăл Атăл тăрăхĕнчи илемлĕ вырăнсенчен пĕри. Ахальтен мар ĕнтĕ çак сăрта Тури Жигули, теççĕ.

Васильсурск—хăйне май хитре хула. Нумай тĕрлĕ ӳсентăран, таса та уçă сывлăш, ишĕлсе тăракан тайлăмра йĕркесĕр хунаса кайнă «ӳсĕр вăрман», сăрт айĕнчен шарлаттарса тапакан çăлкуçĕсем, тайлăмра вырнаçса тухнă пысăк мар çурт-йĕрсем,—çаксем пурте ĕнтĕ сăрттуллă вырăна аса илтереççĕ.

Сăрт тӳпинчен пăхсан, куç умне тĕлĕнмелле тавралăх тухса тăрать. Çурçĕрелле сĕм вăрмансен тĕксĕм океанĕ инçете-инçете сарăлса каять. Аялта Атăлпа Сăр шывĕсем, сенкер-кăвак хăюсем пек, çуталса, авкаланса выртаççĕ. Вĕсем тăрăх пăрахутсемпе баржăсем иртсе пыраççĕ. Çакă нумай тĕрлĕ сăрсемпе ӳкернĕ картина хĕвел çинче тĕлĕнмелле илемлĕн ялкăшса çуталать. Ахальтен мар ĕнтĕ Васильсурск нумай вырăс художникĕсен кăмăлне илĕртнĕ. Ку вырăнсенче И. Шишкинпа И. Левитан художниксем ĕçленĕ. 1899 çулта кунта А. М. Горький килнĕ.

Малалла Атăл Мари республикинелле сулмаклăн авăнса юхса кĕрет. Сылтăм çыранта вырăнĕ-вырăнĕпе юманлăх кашласа ӳсет. Сулахай енче—çурта пек хыр вăрманĕ, çурçĕрти тайгасен сывăх тăванĕ. Çав енчен ĕнтĕ Атăла тӳлек те лăпкă Ветлуга юхса кĕрет, унăн хрусталь евĕр тăрă шывĕ пачах та Сăр шывĕ пек мар, икĕ сывăх тăван—пĕтĕмпех икĕ тĕрлĕ. Унăн ячĕ те вăрман сулхăнлăхне аса илтерет. Акă Атăл хĕрринчен пусма картлашкисем пек эрешленсе улăхакан Козьмодемьянск хули шăвăнса иртет. Ку вăл Ветлуга тăрăх юхтарса антаракан йывăçа йышăнмалли база. Пристаньте марилле, чăвашла, хушăран тата тутарла калаçнисем илтĕнеççĕ, çакă ĕнтĕ вăл виçĕ тăванла республика пĕр-пĕрипе сывăх кӳршĕллине систерет.

Акă хăйхи чăнкă сылтăм çыранăн пысăк хуран пек айлăмĕнче Советлă Чăваш республикин тĕп хули—Шупашкар курăнса каять.

Çулçӳревçĕсем валли çырнă кивĕ кĕнекере эпир çапла вулатпăр: «Шупашкар промышленность тĕлĕшпе те, суту-илӳ тĕлĕшпе те нимĕнле паллă вырăн та йышăнса тăмасть, вăл хăйĕн ĕлĕкрен сыхланса юлнă чиркĕвĕсемпе авалхи паха памятникĕсемсĕр пуçне, нимĕнпе те илĕртмест». Çак сăмахсем халĕ кулăшла та айванла пек туйăнаççĕ. Совет саманинче республика столицин сăн-сăпачĕ паламалла мар улшăнчĕ. Хусан кĕпĕрнинчи тĕттĕм те тĕксĕм уезд хулинчен вăл промышленноçлă пысăк хула—Советлă Чăваш республикин культурăллă центрĕ пулса тăчĕ.

Шупашкарта çӳлĕ те илемлĕ çуртсем—Советсен çуртĕ, педагогика институчĕ, почтамт, гостиница, Чăваш академи театрĕ, пурăнмалли çуртсен кварталĕсем капăрланса лараççĕ. Тĕп урамсене асфальт сарса тухнă. Атăл хĕрри вара уйрăмах илемлĕ курăнать.

Хулара çулсерен çĕнĕрен çĕнĕ çуртсем тăваççĕ. Кĕçех пĕтĕм Союзĕпе палăрса тăракан пир-авăр комбиначĕ строя кĕрет. Хулан кăнтăр хĕрринче Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче çуралнă электроаппаратура завочĕн корпусĕсем курăнаççĕ. Ку завод халĕ коммунизмăн аслă стройкисем панă заказсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлет, кĕçех вăл хăйĕн тăван хулинчи çĕнĕ стройка валли оборудовани хатĕрлеме тытăнать.

Атăл çинче татах тепĕр тинĕс пулать

Хуларан анатарах çак пилĕкçуллăхра Атăл çинче Шупашкар гидростанцине тума тытăнаççĕ. Ăна шăпах ĕнтĕ Куйбышев ГЭС-ĕн тинĕс таппи пĕтнĕ тĕлте тума палăртаççĕ. Эпир пĕлетпĕр, Куйбышев тинĕсĕ Атăл тăрăх тăвалла, Жигулирен пуçласа Шупашкар патне çити, ултçĕр километр таран тапса хăпармалла. Шупашкартан Городец хулине çити Атăл халлĕхе ирĕклĕ-ха. Çав сынăкра тулса сарăлмалла та ĕнтĕ Шупашкар тинĕсĕ. Вăл хăйĕн талкăшĕпе хальхи Мускав тинĕсĕнчен сакăр хут пысăкрах пулать.

Хăйĕн хăвачĕпе Шупашкар гидроузелĕ Атăл çинчи ытти гидроузелсем хушшинче вăтамми: Куйбышевпа Сталинградринчен пĕчĕкрех, анчах Горькиринчен тата тури ытти мĕнпуррисенчен нумай пысăкрах пулмалла.

Атăлăн çак сыпăкĕнче гидроузел тума кирли каламасăрах паллă. Ăшăх вырăнсемпе перекатсем тата утравсем нумай пулни пăрахутсене çӳреме пысăк чăрмав кӳрет, нумай тĕрлĕ кукăр-макăрсем те шыв çулне чылай вăрăмлатаççĕ. Атăла юхса кĕрекен Ветлуга, Сăр, Керженец шывĕсем ăшăх пирки, вĕсем тăрăх пăрахутсем çӳреймеççĕ. Тĕрĕссипе илсен, вĕсем Горький облаçĕн, Чăваш тата Мари АССР-ĕсен çав таврари районĕсемшĕн питех те паха шыв çулĕсем пулнă пулĕччĕç.

Шупашкар гидростанцине туни, чи малтан, хими промышленноçĕ вăйлăн аталаннă тата машиностроенипе транспорт хăвăрт аталанса пыракан Вăтам Атăл районĕнче аслă шыв хăвачĕпе туллин усă курассине пĕлтерет. Промышленноçăн çав отраслĕсем уйрăмах нумай энерги ыйтаççĕ. Ку районта энергин вырăнти ресурсĕсем çителĕксĕрри яланах сисĕнсе тăнă, çав чухăнлăха вара инçетрен кӳрекен кăмрăкпа сыпăнтарса пынă. Малашне Вăтам Атăл тавралăхĕнчи промышленноçпа ялхуçалăхне тата та хăвăртрах малалла аталантарма энергетикăн хăватлă никĕсĕ пулать.

Çĕнĕ водохранилищĕре — Шупашкар тинĕсĕнче, вăтамран, Хĕвеланăç Двина е Урал шывĕсем çулталăк хушшинче юхса тăнă чухлĕ шыв пухăнса тăмалла. Çĕнĕ тинĕс тулса хăпарнипе нумай пин гектар çĕре, пуринчен ытла Атăл леш енчи вăрманлă çĕрсене, шыв илет. Горькипе Шупашкар хушшинчи пысăк мар хуласемпе нумай ялсем е вĕсен пĕр-пĕр пайне, е пĕтĕмĕшпех (калăпăр, Макарьев) шыв илес вырăнсенче лараççĕ. Вĕсене е çӳлерех, е урăх вырăна, водохранилищĕн çĕнĕ çыранне, куçарма тивет. Вĕсем куçарнă хуласемпе ялсем кăна пулмаççĕ, пачах та çĕнĕлле туса лартнă социализмлă хуласемпе ялсем пулаççĕ. Ячĕсем кăна вĕсен киввисем юлаççĕ. Вĕсен таврашĕнчи çутçанталăк татах та илемлĕрех пулать. Çав илем çĕнĕ тинĕсĕн анлă талкăшĕнчи çутă сăнсемпе пуянланать.

Шупашкар тинĕсĕн таппи Атăл тăрăх — Городец хули патĕнчи Горький ГЭС-ĕ таран, Ока тăрăх — Дзержинск хули таран виççĕр аллă километр чухлĕ, Сăрпа Ветлуга шывĕсем тăрăх — икçĕр километр чухлĕ, çавăн пекех Çавалпа Керженец тата ытти шывсем тăрăх та нумай инçете хăнармалла. Çав юханшывсем çинче шыв таппи хăпарни вĕсем тăрăх пăрахутсене инçете çӳретме май парать. Ку вăл юханшыв хĕррисенчи нумай районсемшĕн тата, пуринчен ытла, Атăл леш енчи чугун çулсем çук вăрманлă районсемшĕн питех те паха пулать. Хальхи ăшăх шывсем ун чухне вара çав районсенчен хăватлă Атăл магистралĕ патне тухмалли чаплă шыв çулĕсем пулса тăраççĕ. Атăлăн ку сыпăкне икĕ енчен те нумай тĕрлĕ шывсем, пысăккисем те пĕчĕккисем те, юхса кĕнĕ май, Шупашкар тинĕсĕ çав тери пуян та илемлĕ пулать. Атăл лаппи хăй те кунта пĕр пек мар, вырăнĕ-вырăнĕпе вăл сарлака, вырăнĕ-вырăнĕпе — ансăр, çавна май тинĕс сарлакăшĕ те тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕ пулать, вăтамран ун сарлакăшĕ — çиччĕ-сакăр километр пулмалла, анлăрах вырăнсенче вара — вунпилĕк-çирĕм километра çитмелле.

Шупашкар гидроузелне туса хунипе пула, пĕтĕм Атăл пысăк кӳлĕсен системи, тинĕссен пусми пулса тăрать. Туран шутласа ансан, çĕнĕ тинĕс Аслă Атăл пусмин пиллĕкмĕш сыпăкĕ пулать.

Атăл юхăмĕ хальхинчен чылай лăпкăланса вăрахланать. Çавна май унăн шывĕнчи юшкăн тĕпне ларать, шыв чылай тăрăлса тасалать, халăхпа промышленноçшăн та вара шывпа усă курма лайăхрах пулать.

Вăтам Атăл тăрăхĕнче шыв çуркуннепе час-часах тулса ейĕве тухасси, çапла вара халăх хуçалăхне пысăк сиенсем кӳресси ĕмĕрлĕхех манăçа юлать.

Атăл шывĕ вăраххăнрах юхма тытăнсан, ун тăрăх çӳреме те çăмăлрах пулать. Анатран тăвалла нумай грузсем турттарнине шута илсен, ку вăл питех те усăллă. Шыв çулĕ тарăнланни суднисене çӳреме, вĕсем çине ытларах груз тиеме пысăк майсем уçса парать.

Шыв юхăмĕ вăрахланнипе пула, Атăл кĕркунне иртерех шăнса ларма, çуркунне вара каярах юлса тапранма, пăр та хĕлле хулăмрах пулма пултарать. Çакă вăл навигаци ĕçне чăрмав ан кӳтĕр тесен, Атăл çинче ледоколсем ĕçлеттермелле пулать. Пысăк шыв талкăшĕнче, çилтăвăл тухсан, хум та вăйлăн çĕкленме, хăшпĕр чух, Рыбинск тинĕсĕнчи пек, штормсем те пулма пултараççĕ. Çавăнпа та çĕнĕ тинĕсре нумай çĕрте суднисене хӳтте тăратмалли гаваньсем тата ятарласа хумсене лăплантармалли сооруженисем тăваççĕ.

Вăрманлă зонăра çав тери пысăк тинĕс туса хуни Атăл тăрăхĕнчи çанталăка сисĕнмеллех улшăнтарать. Сывлăш нӳрĕрех те çемçерех пулать. Сылтăм енчи сăртлăхлă районсенче шăпах çу пуçламăшĕнче тырпулсем нӳрлĕх çитменнипе аптраççĕ. Çакна пула тырпул тухăçлăхĕ чылай чакать. Тинĕсрен сывлăша нӳрлĕх пăсланса хăпарнă май, çумăрсем те ытларах çума пуçлаççĕ, тăпрара та нӳрлĕх ытларах пулать.

Шывпа пурăнакан ӳсентăрансемпе чĕрчунсем те улшăнаççĕ. Кӳлĕре ĕрчевен сунах, карп, шăла пулăсен йышĕ вăйлăн ӳссе каять. Çĕнĕ тинĕс çак вырăнсенчи пулă хуçалăхне пысăккăн та анăçлăн аталантарма май парать.

Чăваш тата мари çĕрĕсем çинче

Шупашкартан эпир — малтан Чăваш республикин шалти районĕсене, унтан вара Мари республикине кайрăмăр. Шоссе магистралĕн икĕ енĕпе çӳлĕ йывăçсен речĕсем шăвăнса юлаççĕ. Чăваш республики 30-мĕш çулсенчен пуçласах çулсем тĕлĕшпе чапа тухнă. Саралнă уй-хирсенче вырăнĕ-вырăнĕпе, пысăк утравсем пек, юманлăхсем курăнаççĕ. Ешĕл те хаваслă вăрмансем. Вĕсенче авалхи кĕреш юмансемпе юнашар çăкасем, хурамасем, çĕмĕртсемпе шĕшкĕсем ӳсеççĕ, йывăç тĕмисем айĕнче çăра курăк ешерет. Тĕрлĕ тĕссемпе илемленсе çуталакан тавралăх, инçете-инçете сарăлса, сенкерĕн кăвакарса тăрать; чăн та ĕнтĕ çакăн пек хăйне евĕр илеме вăрманлă çеçенхир таврашĕнче çеç курма пулать. Кăнтăр-хĕвеланăçĕнче, Сăр шывĕн тăрăхĕнче, татах вăрман чăтлăхĕсем пуçланаççĕ, — хура вăрман, сĕм вăрман.

Сырма-çатраллă вырăнсенче кĕçех акă уй-хирсене хӳтĕлекен çамрăк вăрман тăрăхĕсем ӳссе çитĕнеççĕ. Вĕсем уй-хирсене шыв çурса каяссинчен кăна мар, пулас Шупашкар тинĕсне юшкăн туласинчен те хӳтĕлекен пулĕç.

Çул çинче тĕл пулакан ялсем садсемпе тата вăрман пек ӳсекен хăмла ешĕлĕпе витĕннĕ. Ĕлĕкхи Шăхран ятлă пĕчĕк станци вырăнĕнче юлашки çирĕм çул хушшинче ӳссе çитĕннĕ Канаш хули витĕр тухатпăр. Халĕ вăл промышленноçлă чылай пысăк хула, тăватă чугун çул магистралĕн узелĕ. Кунта Пĕтĕм Союзĕпе паллă вагонсем юсакан завод ĕçлет. Çавăн пекех эпир Çĕмĕрле хулинче те пултăмăр. Çĕмĕрле çыннисем, хăйсен хулине кăмăлласа, «пĕтĕм Союзăн сĕтел-пукан ăсти» тесе чĕнеççĕ. Куславккана та çитрĕмĕр. Кунта çĕршыври пысăк предприятисенчен пĕри — пурăнмалли стандартлă çуртсем тăвакан комбинат ĕçлет.

Анчах Чăваш республикинчи ватă хуласем те—Улатăрпа Етĕрне—хăйсен çамрăк тăванĕсенчен юласшăн мар. Улатăрти пăравуссем юсакан заводра юсаса кăларнă пăравуссене, çак хулара туса хатĕрленĕ спорт хатĕрĕсене çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕсенче тĕл пулма пулать. Етĕрне завочĕ çапса кăларакан çу Чăваш республикинчен чылай аяккалла саланать. Республикăн тĕрлĕ районĕсенче йывăç каскалакан, апат-çимĕç хатĕрлекен, строительство материалĕсем туса кăларакан тата ытти вак предприятисем вырнаçнă. Сăр шывĕн тăрăхĕнче вăрçă хыççăнхи çулсенче вăрман промышленноçĕн поселокĕсем нумай ӳсе-ӳсе ларнă.

Çула май эпир Рыкша ятлă пĕчĕк юханшыв хĕрринчи удах кĕтесе вырнаçнă «Серп и молот» колхоза кĕрсе тухатпăр. Кунта эпир ахаль юханшыв кăна мар, Шĕмшер ГЭС-ĕн пĕчĕкçĕ пĕвине тĕл пулатпăр, çакăнтан ĕнтĕ виçĕ колхоза çутă кайса тăрать. Ку вăл—вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхра Чăваш республикинчи Çавал, Кĕтне, Рыкша, Сурăм тата ытти çавăн пек пĕчĕк юханшывсем çинче туса лартнă çĕр электростанцирен пĕри. Çакăн пек ĕнтĕ нумай çĕрте: Кольцовкăра, Çĕрпӳре тата акă кунта—Шĕмшерте электричество вăйĕ колхозниксен пӳрчĕсемпе шкулсенче, армансемпе итемсенче çиççе тăрать.

Хăйĕн ытларахăш пайĕпе Атăл леш енчи вăрманлăх талкăшĕнче вырнаçнă Мари республики те экономикăпа культура аталанăвĕнче пысăк çитĕнӳсем тунă. Вăрман—çак республикăн çутçанталăк панă тĕп пуянлăхĕ тата унăн экономикин никĕсĕ. Çакăнтан ĕнтĕ çĕршыва çĕнĕ стройкисене чи паха йывăç çулсеренех нумай кайса тăрать. Вăрмансăр пушă вырăн çурçĕр-хĕвелтухăçĕнче кăна кăштах пур. Кунта ялсем те йышлăрах.

Ĕлĕк çак кĕтес тĕксĕм упа кĕтесĕ вырăнĕнче шутланнă. Аслă Октябрь марисен çĕрĕ çине çĕнĕ пурнăç кӳчĕ. Марисен çĕрĕ улшăнса çĕнелнине географи картти çине палăртса хунă ĕнтĕ. Унта эсир çĕнĕ хуласемпе поселоксем куратăр; вăрманти юханшывсем çинче—Пысăк тата Пĕчĕк Кокшага, Илеть, Кундыш шывĕсем çинче—темиçе вунăшар ГЭС çуталса ларать. Çавăн пекех вутăпа е торфпа ĕçлекен электростанцисем те сахал мар. Эсир çĕнĕ заводсем—йывăç каскалакан, йывăçран тĕрлĕ хими япалисем кăларакан, йĕтĕн тирпейлекен, суднăсем юсакан заводсем куратăр. Илеть тата Ветлуга шывĕсем çинче, кварцлă хăйăр нумай çĕрте, «Красный стекловар» тата «Революционер» ятлă заводсен мăрйисем тĕтĕрсе лараççĕ.

Революциччен ĕлĕкхи мĕскĕн Царевококшайск хулинче алă вăйĕпе кăна ĕçлекен виçĕ пĕчĕк предприяти пулнă, вĕсенче пурĕ те çитмĕл рабочи шутланнă. Совет саманинче çав мĕскĕн хуларан мари халăхĕн тĕп хули — Йошкар-Ола пулса тăчĕ. Хулана Хусан магистралĕпе çыхăнтаракан чугун çул тăрăх халĕ кунтан ялхуçалăх машинисем, сĕтел-пукансемпе атă-пушмаксем, витаминсемпе тĕрлĕ эмелсем пĕтĕм çĕршыва ăсанса тăраççĕ. Виçĕ институт, вăл шутрах Атăл тăрăхĕнчи вăрман техники институчĕ те, çамрăк специалистсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Атăл хĕрринче целлюлозăпа хут туса кăларакан пысăк комбинат ӳссе ларчĕ, унпа пĕрле Волжск ятлă çĕнĕ хула çитĕнсе çитрĕ. Вăл пуçланса кайнăранпа пурĕ те вуникĕ çул кăна иртнĕ, анчах вăл ĕнтĕ чылай пысăк хула, унта пурĕ вунă предприяти ĕçлет.

Хăй çĕрĕ çинче пысăк çитĕнӳсем тунă «Память Ильича» колхоза кашни мариец лайăх пĕлет. Унăн çав тери пысăк сĕтçу фермисем, утарсем пур. Кунта, Атăл айлăмĕнчи сĕтеклĕ улăхсенче, «юринская» текен çĕнĕ ăратлă ĕне выльăхсем ĕрчетме тытăннă, вĕсем чаплă «холмогоркăран» кăшт çеç каярах тăраççĕ.

Каçхине шоссе тăрăх пынă май пирĕн куç умне пур енчен те ăшшăн та хаваслăн çиçекен çутăсен вĕçĕ-хĕррисĕр чĕнтĕрĕсем тухса тăрсан, чунтанах хĕпĕртесе çапла шухăшлатăн: ĕлĕкхи тĕттĕм те чухăн ялсем тата мещенле юханчăк хуласем пулнă вырăнта халĕ электричество çутипе çĕнĕ асамат кĕперĕ ялкăшса çĕкленчĕ.

Электричество токĕ çиççе килсен...

Халĕ ĕнтĕ малашлăхалла тинкерсе пăхар.

...Эсир Шупашкартан инçех мар, Атăлăн чăнкă та ешĕл çыранĕ çинче тăратăр. Çакăнтан сирĕн куç умне чаплă та аслă панорама тухса выртать.

Гидроузелăн сооруженийĕсем Атăл урлă пилĕк километр ытла тăсăлса каяççĕ. Атăлăн малтанхи çулне çӳлĕ пĕве хывса пӳлсе лартнă, пĕвен пĕр вĕçĕ чăнкă сыран хĕррине пырса тĕреннĕ. Лере, сулахай енчи ăшăх вырăн пулнă çĕрте,—тимĕрпе бетонран хывнă шыв сикмелли пĕве тата ГЭС-ăн тĕп çурчĕ, малалла пăрахутсем тухса çӳремелли шлюзсем курăнаççĕ. Тимĕрпе бетон пĕве пĕр вăхăтрах кĕпер те пулса тăрать, ун тăрăх Йошкар-Олана, Кирова тата малалла, çурçĕрелле каякан автомобильсемпе электропоездсем çиççе иртессĕ.

Пĕверен тăварах вара куç виçейми тинĕс сарăлса выртать; унăн сулахай çыранĕ инçетри сенкер тĕтреллĕ вăрманăн хĕррипе тăрăхĕ çеç палăртса тăрать. Усă çил шыва тӳлеккĕн хумхантарать, сенкер хумсем çинче хĕвелĕн ылтăн пайăркисем çиççе выляççĕ. Çĕнĕ портри шыв вокзалĕ çумĕнчен виçĕ палубăллă, шурă те икçĕр лаша вăйлă, çав тери хитре теплоход уйăрлса каять. Ку вăл шывра ишекен пысăк кермен.

Çӳлĕ çыран пирĕн куçа шлюз хаппи усăлни курăнать. Карап, Шупашкар тинĕсĕпе сыв пуллашса уйăрлнă пек, сакăнпа пĕр вăхăтрах, Куйбышев тинĕсĕпе тĕл пулса, ăна саламланă пек, вăрăммăн та хулăм саслăн гудок парать.

Ишекен волнолом хӳттинчи портра, вокзалтан сулахаярахра, темиçе карап çинчен груз пушатаççĕ. Портри хăватлă крансем кĕрнеклĕ грузсене трюмран çаклатса кăлараççĕ те, çăмăллăн çавăрнса, вĕсене çырана антараççĕ. Сывлăшра çĕр мамăк тюкĕсем вĕлтлете-вĕлтлете иртеççĕ. Çĕр мамăкне кунта Вăтам Азирен Туркменин Тĕп каналĕпе, Каспи тинĕсĕ урлă, Атăл тăрăх кӳрсе килнĕ. Юнашар Ростовран илсе килнĕ электротракторсемпе ялхуçалăх машинисене, Уралпа Донбасран илсе килнĕ станоксене, Кавказран, Вăтам Азирен, Украинăпа Крымран илсе килнĕ ытти грузсене пушатаççĕ.

Каялла вара карапсем çине Чăваш тата Мари республикисенчи заводсемпе уйхирсенчен илсе килнĕ грузсене тиеççĕ, кунта—кăткăс электроаппаратура, химикалисем, фосфоритлă удобренисем, хут, стандартлă çуртсем, тырпул, хăмла, пурçăн пусма-таварсен тĕркисем,— чăн та çапла, ан тĕлĕнĕр! Мĕншĕн тесен Маньчжурирен илсе килнĕ пурçăн хурчĕ Вăтам Атăлти юманлăхсенче хăйĕн иккĕмĕш тăван çĕршывне тупрĕ. Вăл халĕ паха пурçăн çипĕ парса тăрать. Çав çипрен тĕртнĕ те ĕнтĕ карап çине тиекен пурçăн пусма-таварсене!..

Гидроэлектростанцирен пысăк вольтлă электроток ăсатакан проводсене çӳлĕ мачтăсем çĕклесе тăраççĕ, вĕсем ретĕнретĕн тĕрлĕ еннелле каяççĕ: хĕвеланăçнелле—Горькипе Мускав хулисене, хĕвелтухăçнелле—Хусана, Мари республикин вăрманĕсене, Чăваш республикин районĕсене. Вĕсем машинăсем тăвакан çĕнĕ гигантсене, хими завочĕсене, апат-çимĕç индустрине ток парса тăраççĕ.

Çĕнĕ ГЭС туса кăларакан электроэнерги миллионшар тонна çĕр кăмрăкĕ перекетлеме, çав кăмрăка турттарас ĕçрен вуншар пин вагон хăтарма май парать.

Шупашкар ГЭС-ĕ Куйбышеври, Сталинградри, Кама çинчи тата Горькири ГЭС-семпе çыхăнать, çапла вара, уйчченхи чи пысăк энергосистемăсемпе пĕрлешсе, Русская равнина текен аслă çĕр талкăшне проводсен хăватлă уйкине çавăрса илсе, тĕнчере çук аслă пĕр система пулса тăрать.

Çĕнĕ гидростанцирен йӳнĕ электроэнерги илсе тăма тытăнсан, Чăваш тата Мари республикисен сăн-сăпачĕсем паллаималла мар улшăнса çĕнелеççĕ. Çав çутă кунсене эпир уççăн курса тăратпăр ĕнтĕ. Чул çуртсем, вунă çул вĕренмелли шкулсемпе чаплă клубсем, водопровод башнисем лартса тухнă «Серп и молот» тата «Память Ильича» пек колхозсем ун чухне ялхуçалăх производствин культури тĕлĕшпе чăн-чăн паха тĕслĕхсем пулса тăраççĕ. Тырпул акассипе пухса кĕртессинчен пуçласа выльăхсене апатлантарасси, сăм касассипе ĕне сăвасси таран, пур ĕçе те электричество вăйĕпе туса пыма тытăнаççĕ. Уй-хирсене электротракторсемпе электрокомбайнсем тата электричествăпа ĕçлекен ытти машинăсем тухаççĕ. Мари вăрманĕсенче çĕнĕ заводсем ӳссе лараççĕ: химипе кĕленче завочĕсем, хут фабрикисемпе строительство материалĕсем туса кăларакан предприятисем.

Атăл тăрăхĕ сланецпа фосфорит тĕлĕшĕнчен пуян. Чăваш республикинчи промышленность аталанăвĕ малашне çав пуянлăхсемпе çыхăнса тăрать. Сланец—органика тĕлĕшĕпе пĕтĕçтерсе тĕрлĕ япаласем туса хатĕрлемелли паха чĕртавар. Сланецран спиртсемпе лаксем, техникăллă çусемпе çунакан газсем пулаççĕ. Фосфорит—минераллă удобренисем тумалли чĕртавар. Атăл тăрăхĕнчи çĕрсене çав йышши удобренисем малашне çултан-çул ытларах кирлĕ пулаççĕ.

Çакăн пек пулать пур çĕрте те: Марипе Чăваш республикисенче те, кӳршĕри Тутар республикинче те Шупашкар ГЭС-ĕнчен проводсем тăрăх пыракан йӳнĕ электроэнерги фабрикăсемпе заводсенчи тата уй-хирсенчи моторсене çавăрма тытăнать. Кирек мĕнле продукцире те,—машина-и вăл е вагон, сĕтел-пукан-и е смала, çăм-и е тырпул,—аслă шывăн хăвачĕ палăрса тăракан пулать.

Тепĕр сакăр е вунă çул кăна иртет,—Атăл çыранĕн сăн-сăпачĕсем йăлтах улшăнаççĕ. Вĕсене вара çĕнĕрен сăнласа ӳкерме тивет, çавăн пекех географи учебникĕсене те пачах çĕнĕрен çырмалла пулать.

Шупашкар ГЭС-ĕ — «Аслă Атăл пусмин» пиллĕкмĕш сыпăкĕ—ĕçлекен предприятисен стройне кĕрсе, коммунизм патнелле шанчăклăн утса пыракан Совет çĕршывĕн индустриллĕ вăй-хăватне тата та ытларах ӳстерĕ.

Г. МАТВЕЕВ.

(«Вокруг света» журналăн 12-мĕш номерĕнчен).

Никитовкăри 4—5-мĕш номерлĕ шахта—Донбасри малта пыракан шахтăсенчен пĕри. Кунти шахтерсем 1952 çулхи плана срокчен тултарнă. Шахтăра пĕтĕм ĕçе механизацилене.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: участок мастерĕ П. С. Брызгалов тата Е. Г. Рагожина кăмрăк кăларнă вырăна виçсе пăхаççĕ.

С. ГЕНДЕЛЬМАН фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Ялхуçалăх хыпарĕсем

★ Бобруйск облаçĕнче (Белорус ССР-ĕ) шурлăхсене типĕтсе акма юрăхлă çĕр тăвас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеççĕ. Ку ĕçре колхозсене машина-мелиораци станцисем тата МТС-сен мелиораци отрячĕсем пулăшаççĕ. Шурлăхсене типĕтнĕ çĕрпе усă курма пуçланă май кăçал облаçри 115 колхозăн тата 5 совхозăн тырпул акмалли çĕрĕ 10 пин гектар чухлĕ хутшăнать.

★ Казахстанра чылай пысăк çĕр лаптăкĕ çинче тырпула шăварса ӳстереççĕ. Тырпула шăвармалла тăвас тĕлĕшпе кашни çулленех ĕçлеççĕ. Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх пуçланнăранпа иртнĕ икĕ çул хушшинче 50 пин гектар çĕре шăвармалла тунă. 1953 çулта тата 40 пин гектар çĕре шăвармалла тăваççĕ. Унта колхозсемпе совхозсем хлопчатник, сахăр кăшманĕ тата ытти хаклă культурăсем акса тума тытăнаççĕ. Икĕ миллион гектар ытла çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсем çине шыв яраççĕ, унта, шыв тăнă хыççăн, курăк вăйлă ӳсекен пулать.

★ Азербайджанри колхозсенче хĕллехи вăхăтра усă парниксене табак вăрри акаççĕ. Çакăн пек аксан табак калчи парка ӳсет, ăна çуркунне иртерех куçарса лартма май пулать. Колхозсенче табак лартмалли вырăнсене сухалаççĕ, минераллă удобренисем сапса çемçетеççĕ.

★ Одесса облаçĕнчи Котовск районĕнче кашни икĕ колхозран пĕри миллионер-колхоз шутланать. Уй-хирти ĕçсене 93 процент чухлĕ машинăсемпе тăваççĕ. Района йывăçсем лартса ӳстерме 15 çуллăха панă задание 3 çулта пурнăçланă. Колхозниксем кашни çулленех пысăк тухăçлă сахăр кăшманĕпе тырпул туса илеççĕ.

Котовск районĕнче кашни ялтах радио, телефон, шкул, библиотека, кино, больница е амбулатори, магазин, клуб, драма тата хор кружокĕсем пур. Кашни киле хаçат-журнал килсе тăрать.

ФРУНЗЕ, январĕн 8-мĕшĕ. Киргизин кăнтăр пайĕнче ăшă кунсем тăраççĕ. Ош тата Джалал-Абад облаçĕсенчи чылай районсенчи колхозсем суха тума тытăннă.

Араван МТС-ĕнче гусеницăллă тракторсем çине минераллă удобренисем сапса пымалли хатĕрсем вырнаçтарса лартнă. Иртнĕ вăхăтра кунта удобренисем сапас ĕçе тума 20 трактор кирлĕ пулнă пулсан, халĕ ĕнтĕ вĕсем ĕçрен пушаннă. Çакăн пек майпа ĕçлени горючи тата укçа-тенкĕ нумай перекетлесе хăварма май парать.

Араван МТС-ĕнчи механизаторсен паха опычĕпе республикăри ытти механизаторсем те усă кураççĕ. (ТАСС)

Çулталăкри плана ирттерсе тултарнă

ИШЛЕЙ. Çĕктер вăрман комбинатĕнче ĕçлекенсем социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене яланах чыслăн пурнăçлаççĕ. Иртнĕ çулхи плана комбинат 117,8 процент пурнăçларĕ.

Хальхи вăхăтра комбинат коллективĕ вырăнти Советсене суйламалли куна — февралĕн 22-мĕшне икĕ уйăхри плана ирттерсе тултарнипе кĕтсе илессишĕн ăмăртса ĕçлет.

В. ЧЕРНОВ.

Квартал итогĕсем

Шупашкарти перекет кассисем 1952 çулхи IV-мĕш кварталти социализмлă ăмăрту итогĕсене пăхса тухрĕç.

Тĕрĕслӳ перекет кассисен коллективĕсем йышăннă обязательствăсене чыслăн пурнăçланине кăтартса пачĕ. Хулари перекет кассисем пĕрле плана 290,6 процент тултарнă.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри перекет касси плана 967 процент, Советсен çуртĕнчи—936 процент, хулари 60-мĕш номерлĕ центральнăй перекет кассинчи Карташова ертсе пыракан смена 336 процент тултарнă.

Халĕ хулари перекет кассисен коллективĕсем 1953 çулхи 1-мĕш квартал планне мартăн 8-мĕшĕ—Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен кунĕ тĕлне тултарассишĕн социализмлă ăмăртăва тухрĕç.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕ йышăннă решени

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен участоксенчи суйлав комиссисен составне çирĕплетесси çинчен

«Чăваш АССР ĕçсынни депутачĕсен район, хула, ял тата поселок Совечĕсене суйламалли положенин» 55-мĕш тата 56-мĕш статьисем тăрăх, ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен участоксенчи суйлав комиссисене общественнăй организацисемпе ĕçсыннисен обществисен çак представителĕсене кĕртсе çирĕплетес:

1-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комиссĭ председателĕ Елизавета Михайловна **Стешова** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Дарья Григорьевна **Петрова** — Чăваш АССР Сывлăх министерствинчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Петр Николаевич **Осипов** — медицина работникĕсен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Раиса Алексеевна **Корягина** — 14-мĕш номерлĕ ача садĕнчи работниксен коллективĕнчен.

Василий Яковлевич **Никитин** — Ялхуçалăх институтĕнчи наука работникĕсен, студентсен тата служащисен коллективĕнчен.

Нина Ивановна **Иванова** — ача çуратмалли çуртри медицина работникĕсен коллективĕнчен.

Сергей Герасимович **Герасимов** — «Заготживсырье» Чăваш республикинчи кантурĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Нина Петровна **Андреева** — «Заготзерно» Чăваш республикинчи кантурĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Нина Ивановна **Соломкина** — хĕрачасем вĕренекен 5-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

2-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Иван Афанасьевич **Батиенко** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Павел Михайлович **Арбатов** — арçын ачасем вĕренекен 2-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Прасковья Алексеевна **Доянова** — Шупашкар хулинчи санитари-эпидеми станцийĕнчи медицина работникĕсемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Валентина Александровна **Шленкина** — Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерствинчи работниксен коллективĕнчен.

Мария Семеновна **Миролюбова** — Чăваш республикинчи трахоматознăй наукăпа тĕпчев институтĕнчи наука работникĕсемпе служащисенчен.

Алексей Алексеевич **Алексеев** — «Водосвет» трестĕнчи рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Прасковия Николаевна **Шишокина** — эрехпе ликер заводĕнчи рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Мария Герасимовна **Михайлова** — кирпĕч заводĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Николай Михайлович **Макаров** — республикăри ветеринари поликлиникинчи работниксен коллективĕнчен.

3-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Татьяна Карповна **Рымакова** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Клавдия Павловна **Державина** — ача больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Екатерина Дмитриевна **Петрова** — ача больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Мария Васильевна **Ананьева** — ача больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Тамара Николаевна **Колесникова** — медицина работникĕсен профсоюзĕн Чăваш обкомĕнчен.

4-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Анастасия Васильевна **Буянова** — медицина работникĕсен профсоюзĕн Чăваш обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Мария Алексеевна **Николаева** — республикăри больница работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Елизавета Ивановна **Иванова** — республикăри больница работникĕсен коллективĕнчен.

Анастасия Георгиевна **Лаптева** — республикăри больница работникĕсен коллективĕнчен.

Ираида Наумовна **Чернова** — медицина работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

5-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Сергей Игнатьевич **Ухватов** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Михаил Иванович **Соловьев** — çыхăну управленийĕнчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Прасковья Григорьевна **Леснова** — ялхуçалăх шкулĕнче вĕренекенсен, преподавательсен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Анна Михайловна **Михайлова** — Шупашкарти çыхăну кантурĕн работникĕсен коллективĕнчен.

Надежда Константиновна **Стешова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Михаил Ильич **Перевалкин** — Чăвашкниготорг работникĕсен коллективĕнчен.

Надежда Анатольевна **Кошечкина** — МТС-семпе çĕрĕç органĕсенчи рабочисемпе служащисен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Алексей Иванович **Пахмутов** — Чăвашросснабсбытри рабочисемпе служащисенчен.

Анна Михайловна **Кашина** — çыхăну работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

6-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Петр Харитонович **Лихошерст** — Чăваш АССР облвоенкомат работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Августа Федоровна **Сергеева** — Чăваш республикинчи Максим Горький ячĕпе тăракан библиотекăри служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Мария Павловна **Еремкина** — Аптекоуправленири рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Алексей Алексеевич **Алексеев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Герасим Терентьевич **Кузнецов** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Христина Павловна **Павлова** — 1-мĕш индпошив мастерскойĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Галина Константиновна **Китаева** — Аптекоуправленири рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Константин Иванович **Зотин** — политпросвет работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Лена Ивановна **Пегасова** — Çар, Авиаци тата Флот ĕçне пулăшакан ирĕклĕ обществăн хулари организацийĕнчен.

7-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Николай Степанович **Чернов** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Александр Иванович **Степанов** — Чăвашдревпромсоюз работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Елизавета Ивановна **Миронова** — çăнăх авăртакан промышленноçпа тата элеваторсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Анна Прокопьевна **Демидова** — Чăваш АССР Финанс министерствинчи работниксен коллективĕнчен.

Петр Алексеевич **Алексеев** — Уполминзаг работникĕсен коллективĕнчен.

Галина Матвеевна **Ужаева** — Чебторгри рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Евгения Макаровна **Макарова** — Чăваш АССР прокуратура работникĕсен коллективĕнчен.

Ефимия Яковлевна **Сергеева** — Чăваш АССР Верховнăй Сучĕн работникĕсен коллективĕнчен.

Раиса Петровна **Кочетова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

8-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Борис Илларионович **Енисеев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Раиса Вениаминовна **Ляшко** — 11-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Клавдия Николаевна **Запрудная** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюз обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Синелле Николаевич **Хаймулин** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Иван Яковлевич **Кирилин** — Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин работникĕсен коллективĕнчен.

Лев Александрович **Николаев** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хула комитетĕнчен.

Анфиса Матвеевна **Майорова** — «Заготзерно» Шупашкарти пунктĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Анна Димитриевна **Трофимова** — 11-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Евдокия Васильевна **Анулова** — «Заготзерно» Шупашкарти пунктĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

9-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Александр Федосеевич **Бенренев** — пир-авăр комбинатĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Елизавета Николаевна **Егорова** — пир-авăр техникумĕнче вĕренекенсен тата преподавательсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Евгения Федоровна **Уськина** — «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Никонор Николаевич **Краснов** — «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Павел Васильевич **Смолин** — «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Валентина Ивановна **Меркулова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Глеб Николаевич **Медведев** — «Легпромстройăн» 11-мĕш трестĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Юлия Петровна **Сапожникова** — пир-авăр комбинатĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Лидия Семеновна **Ефимова** — «Заготзерно» республикăри кантурĕнчи работниксен коллективĕнчен.

10-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Антон Артемьевич **Овчинников** — Чăвашпромстрахсовет работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Василий Алексеевич **Алексеев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Анна Спиридоновна **Сырова** — хĕрачасем вĕренекен 3-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Евгения Андреевна **Филиппова** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хулари комитетĕнчен.

Валентина Аверкиевна **Аверкиева** — «Кожупряжь» промысла артелĕн членĕсенчен.

Вера Ивановна **Ластушкина** — Чăвашшвейпромсоюз работникĕсен коллективĕнчен.

Михаил Михайлович **Свинцов** — чăлха фабрикинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Галина Петровна **Антонова** — чăлха фабрикинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Тамара Михайловна **Таранова** — «Кожупряжь» промысла артелĕн членĕсенчен.

11-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Михаил Григорьевич **Налимов** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Суйлав комисси председателĕн заместителĕ Владимир Сергеевич **Бронников** — потребкоопераци работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Клавдия Федоровна **Обухова** — финанспа банк работникĕсен профсоюзĕн Чăваш область комитетĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Михаил Фомич **Рубцов** — Чăвашгиз работникĕсен коллективĕнчен.

Лидия Ивановна **Кудрявцева** — Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин работникĕсен коллективĕнчен.

Анатолий Васильевич **Вальков** — Чăвашпотребсоюзри рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Дина Моисеевна **Костинская** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Наталия Васильевна **Полтева** — Промышленность банкĕн Чăваш республикинчи кантурĕнче ĕçлекенсен коллективĕнчен.

Ольга Петровна **Шереметьева** — Чăваш республикинчи ача-пăча театрĕн работникĕсен коллективĕнчен.

12-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Михаил Петрович **Казаков** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Надежда Филипповна **Филиппова** — пир-авăр фабрикинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Тамара Михайловна **Гоголева** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Аркадий Андреевич **Прохоров** — 6-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Клавдия Александровна **Матвеева** — тумтир çĕлекен 2-мĕш индпошив мастерскойĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Раиса Мартыновна **Ефремова** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хулари комитетĕнчен.

Евдокия Андреевна **Филиппова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Виталий Иванович **Самарин** — Чăваш республикинчи оргнабор кантурĕнчи рабочисемпе служащисенчен.

Мария Ивановна **Ботайкина** — макарон фабрикинчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

13-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Николай Васильевич **Плетнев** — Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Зоя Васильевна **Шигаева** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Зинаида Емельяновна **Семенова** — Чăваш педагогика институтĕнчи студентсен, преподавательсен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Василий Иванович **Иванов** — Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерствин хулара пушартан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен работникĕсен коллективĕнчен.

Дмитрий Яковлевич **Малышев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Владислав Григорьевич **Данилов** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен коллективĕнчен.

Федор Тихонович **Тихонов** — электромеханически техникумри студентсемпе преподавательсен коллективĕнчен.

Мария Прокопьевна **Титова** — Чăваш педагогика институтĕнчи студентсен, преподавательсен тата служащисен коллективĕнчен.

Анна Ефимовна **Дементьева** — çыхăну работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

14-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Ростислав Леонидович **Гринев** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Галина Васильевна **Баранова** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Мария Михайловна **Ардаматская** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Владимир Александрович **Босляков** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Михаил Гаврилович **Гранацкий** — хулари военкомат работникĕсен коллективĕнчен.

Сергей Алексеевич **Бирюков** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Федор Захарович **Захаров** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Римма Ивановна **Софроницкая** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Любовь Алексеевна **Трифонова** — Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

15-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Артемий Васильевич **Васильев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Михаил Алексеевич **Орлов** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хулари комитетĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Иван Григорьевич **Григорьев** — ВЛКСМ Чăваш обкомĕнчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Николай Александрович **Улыкин** — Хусан чугун çулĕн 17-мĕш дистанцийĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Петр Алексеевич **Петриченко** — чугун çулăн Шупашкар станцийĕнчи рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Ксения Андреевна **Андреева** — чугун çулăн Шупашкар станцийĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Нина Афанасьевна **Синельникова** — Главшвейсбытăн Чăваш республикинчи базинче ĕçлекен рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Мария Игнатьевна **Игнатьева** — Хусан чугун çулĕн 17-мĕш дистанцийĕнчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Леонид Иванович **Алексеев** — 22-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

16-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Александр Михайлович **Никулин** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Анна Андреевна **Столярова** — государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Дмитрий Федотович **Дубинин** — «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакци работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Людмила Кузьминична **Хорькова** — Коммунальнăй хуçалăх министерствинчи инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Раиса Семеновна **Тимофеева** — искусство работникĕсен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

Петр Гордеевич **Гордеев** — Чăваш АССР Юстици министерствинчи служащисен коллективĕнчен.

Нина Никитична **Дидык** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Григорий Гаврилович **Гаврилов** — Чăваш АССР Госплан служащийĕсен коллективĕнчен.

Таисия Михайловна **Климентова** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хулари комитетĕнчен.

17-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Евсигней Григорьевич **Пайгусов** — хулари военкомат работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Петр Кузьмич **Гульев** — МТС-семпе çĕрĕç органĕсенчи рабочисемпе служащисен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Вера Константиновна **Макарова** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Валентина Ивановна **Листова** — Ялхуçалăх министерствин ветбаклаборатори работникĕсен коллективĕнчен.

Марк Васильевич **Васильев** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хула комитетĕнчен.

Матвей Андреевич **Ятманов** — çăнăх авăртакан промышленноçпа элеваторсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Валентина Ефимовна **Ефимова** — «Победа» промысла артелĕн членĕсенчен.

Екатерина Арсентьевна **Наумова** — «Красный мебельщик» промысла артелĕн членĕсенчен.

Василий Сильвестрович **Сильвестров** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

18-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Василий Иванович **Железнов** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Галина Федоровна **Дорофеева** — горкомхозăн чечек хуçалăхĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Алексей Кузьмич **Кузьмин** — Чăваш АССР Ялхуçалăх министерствин работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Гурий Григорьевич **Григорьев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Лидия Михайловна **Суданова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Леонид Николаевич **Фомин** — «Союзлесторгăн» Чăваш республикинчи йывăç хатĕрлесе сутакан базинчи тата Шупашкарти йывăç сутакан складĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Ираида Геннадьевна **Ковалева** — «Чебторгин» артелĕн членĕсенчен.

Леонид Андреевич **Елсуков** — пир-авăр фабрикинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Ольга Васильевна **Соколова** — государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

19-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Василий Алексеевич **Алексеев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Идея Алексеевна **Бочаева** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Анна Степановна **Зерняева** — краеведени музейĕнчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Иван Петрович **Натальин** — хулари физкультурăпа спорт комитетĕнчен.

Степан Степанович **Богданов** — хулари физкультурăпа спорт комитетĕнчен.

Артемий Павлович **Павлов** — Чăвашпотребсоюзăн хатĕрлев управленийĕн снабжени базинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Валентина Захаровна **Кривцова** — государство учрежденийĕсенчи работниксен профсоюзĕн облаçри организацийĕнчен.

Антонина Ивановна **Ведяшева** — Чăвашпотребсоюзăн хатĕрлев управленийĕн снабжени базинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Игорь Михайлович **Соколов** — Чăваш АССР Шалти ĕçсен министерстви работникĕсен коллективĕнчен.

20-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Сергей Николаевич **Дмитриев** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Степан Семенович **Ромашкин** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Георгий Николаевич **Зуев** — 14-мĕш пуçламăш шкулти учительсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Екатерина Борисовна **Набилкова** — педагогика институтĕнчи студентсемпе преподавательсен коллективĕнчен.

Василий Павлович **Павлов** — Чапаевски поселокри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективĕнчен.

Зоя Васильевна **Васильева** — Чăвашпромсовет сотрудникĕсен коллективĕнчен.

Михаил Михайлович **Павлов** — Главторчерметăн Чăваш республикинчи кантурĕнчи рабочисемпе служащисен коллективĕнчен.

Елизавета Афанасьевна **Пташкова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Петр Данилович **Данилов** — пуçламăш тата вăтам шкул работникĕсен профсоюзĕн хула комитетĕнчен.

21-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Ольга Николаевна **Гудкова** — хулари Хĕрлĕ Хĕрес обществинчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Татьяна Яковлевна **Захарова** — ача çуратмалли çурт работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Геннадий Михайлович **Прохоров** — медицина работникĕсен профсоюзĕн область комитетĕнчен.

Степанида Максимовна **Махонина** — гинекологи больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Василиса Федоровна **Павленко** — ача çуратмалли çурт работникĕсен коллективĕнчен.

22-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Анна Александровна **Александрова** — республика больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Александра Николаевна **Кошечкина** — трахоматознăй институт работникĕсен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Вера Александровна **Гурьева** — медицина работникĕсен профсоюзĕн обкомĕнчен.

Ирина Анисимовна **Анисимова** — республика больницинчи работниксен коллективĕнчен.

Антонина Михайловна **Богданова** — республика больницинчи работниксен коллективĕнчен.

23-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Александр Михайлович **Кириченко** — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Мария Федоровна **Мерентяева** — Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Варвара Исаевна **Рыжкина** — 7-мĕш вăтам шкулти учительсемпе служащисен коллективĕнчен.

Участокри суйлав комисси членĕсем:

Александр Петрович **Петров** — Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Зинаида Ивановна **Петрова** — Чапаевски поселокри профсоюз организацийĕнчен.

Велентин Христофорович **Петров** — Чапаевски поселокри профсоюз организацийĕнчен.

Лидия Прокопьевна **Архипова** — Пĕтĕм Союзри Çамрăксен Ленинла Коммунистла Союзĕн хулари организацийĕнчен.

Иван Васильевич **Решетов** — Çар, Авиаци тата Флот ĕçне пулăшакан ирĕклĕ обществăн Шупашкар хулинчи организацийĕнчен.

Христофор Алексеевич **Алексеев** — Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

24-мĕш СУЙЛАВ УЧАСТОКĔ

Участокри суйлав комисси председателĕ Леонид Васильевич **Привалов** — Чапаевски поселокри профсоюз организацийĕнчен.

Участокри суйлав комисси председателĕн заместителĕ Виктор Максимович **Зайцев** — Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Участокри суйлав комисси секретарĕ Василий Антонович **Корольков** — Çар, Авиаци тата Флот ĕçне пулăшакан ирĕклĕ обществăн хулари организацийĕнчен.

(Юлашки 4-мĕш страницăра).

Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗ йышӑннӑ решени

Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Советне суйлас тӗлӗшпе ӗҫлекен участоксенчи суйлав комиссисен составне ҫирӗплетесси ҫинчен

(Юлашки. Пуҫламӑшӗ 3-мӗш страницӑра).

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Никита Никонорович **Кудяков**—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн хулари организацийӗнчен.

Нина Сильвестровна **Мефодьева**—Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Геннадий Тихонович **Тихонов**—Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Нина Георгиевна **Самсонова**—Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Мария Михайловна **Михайлова**—Чапаевски поселокри рабочисенчен, инженерсемпе техниксенчен тата служащисенчен.

Нина Семеновна **Купцова**—Чапаевски поселокри профсоюз организацийӗнчен.

25-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Владимир Ефимович **Кузнецов**—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Иван Степанович **Сидорчикин**—Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Анна Васильевна **Суринова**—Сосновкӑри хӑма ҫуракан заводри рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Анна Григорьевна **Трошина**—пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн хулари комитетӗнчен.

Нонна Васильевна **Попова** — Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Зоя Дмитриевна **Беляникина** — Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

Анатолий Афанасьевич **Афанасьев** — Чӑваш АССР Государство хӑрушсӑрлӑхӗ министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

Петр Матвеевич **Можаров** — вӑрман ӗҫӗнчи тата сулӑ юхтаракан рабочисен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Александра Николаевна **Юренкова** — «Чӑвашторг» уйрӑмӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

26-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Михаил Матвеевич **Глухов** — Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Александр Федорович **Красотин**—коммунальнӑй хуҫалӑхри рабочисен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Антонина Николаевна **Люкшина**—коммунальнӑй хуҫалӑхри рабочисен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Наталия Алексеевна **Костычева**—Атӑл леш енчи электростанцинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗнчен.

Наталия Александровна **Александрова**—Атӑл леш енчи электростанцинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗнчен.

Лидия Алексеевна **Тимофеева** — Атӑл леш енчи электростанцинчи рабочисен, инженерсемпе техниксен тата служащисен коллективӗнчен.

Павел Павлович **Солдаткин** — Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Павел Иванович **Малов** — санаторнӑй ача суртӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Василий Петрович **Соловьев**—трестӑн вӑрман хатӗрлекен кантурӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

27-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Андрей Иванович **Коровенков**—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Ибрагим Газизович **Газизов** — торфопредприятири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Вера Мироновна **Миронова** — торфопредприятири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Иосиф Дмитриевич **Назаров** — торфопредприятири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Галина Ивановна **Кирилина** — Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Юлия Тарасовна **Тарасова**—торфопредприятири рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Елена Викторовна **Новикова**—Шупашкар вӑрман хуҫалӑхӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Лидия Александровна **Павельева**—учительсен кӑнмалли суртӗнчи работникӗсен коллективӗнчен.

Виктор Александрович **Михайлов**—Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

28-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Николай Александрович **Курочкин** — Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Василий Степанович **Крылов**—химлесхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Валентина Алексеевна **Гущина** — Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Иван Дмитриевич **Морозов** — Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

Алексей Тимофеевич **Тимофеев**—Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

Василий Алексеевич **Алексеев**—Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Николай Федорович **Мельников**—химлесхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Иван Николаевич **Мутиков** — Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Анна Игнатьевна **Селиванова**—Чӑваш АССР Шалти ӗҫсен министерствин работникӗсен коллективӗнчен.

29-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Варфоломей Игнатьевич **Волков**—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Василий Семенович **Комаров**—Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Ефросиния Федоровна **Мясникова**—вӑрман ӗҫӗнчи тата сулӑ юхтаракан рабочисен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Сергей Пантелеевич **Федоров** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Михаил Николаевич **Моисеев** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Любовь Матвеевна **Саперова** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Галина Николаевна **Шомина** — вӑрман ӗҫӗнчи тата сулӑ юхтаракан рабочисен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Глафира Павловна **Павлова** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Анатолий Иванович **Кузнецов** — Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

30-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Борис Алексеевич **Борисов**—Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси председателӗн заместителӗ Александра Кузьминична **Соснова**—Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Шупашкар хулинчи организацийӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ Зоя Васильевна **Никифорова**—Мари вӑрманпромхозӗнчи рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗсем:

Екатерина Семеновна **Ионычева** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Алексей Александрович **Александров**—Пӗтӗм Союзри Ҫамрӑксен Ленинла Коммунистла Союзӗн хулари организацийӗнчен.

Андрей Петрович **Демидов**—Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Анна Николаевна **Ильина**—пуҫламӑш тата вӑтам шкул работникӗсен профсоюзӗн обкомӗнчен.

Мария Александровна **Офтаева** — Приволжски вӑрманпромхозри рабочисемпе служащисен коллективӗнчен.

Иван Данилович **Сашанов** — «Парат» артель членӗсен коллективӗнчен.

31-мӗш СУЙЛАВ УЧАСТОКӖ

Участокри суйлав комисси председателӗ Николай Кузьмич **Кузьмин**—Кувшинкӑри инвалидсен ҫурчӗн работникӗсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси секретарӗ—Федор Лукич **Смирнов**—Кувшинкӑри инвалидсен ҫурчӗн работникӗсен коллективӗнчен.

Участокри суйлав комисси членӗ:

Ольга Никитична **Колумбева**—Кувшинкӑри инвалидсен ҫурчӗн работникӗсен коллективӗнчен.

Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗн председателӗ Н. ЕНЧИКОВ.

Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар хула Совет исполкомӗн секретарӗ Л. МЫШКИНА.

1953 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗ.

Корейӑри ӗҫсем

ХАЛӐХ ҪАРӖН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙӖ ПӖЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнай командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх доброволецӗсен соединенийӗсем Кымхва районӗнче Америкӑпа Англи интервенчӗсен тата Ли Сын Ман ҫарӗсене хирӗҫ ҫапӑҫнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем паян тӑшманӑн 3 самолетне персе ӳкернӗ, 2 самолетне сиенленӗ. Вӑл самолетсем мирлӗ халӑх пурӑнакан районсем ҫине тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнӑ тата пулеметсенчен пенӗ ҫӗре хутшӑннӑ пулнӑ.

ПХЕНЬЯН, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Демократиллӗ Корея Халӑх Республикин Халӑх ҫарӗн Главнай командованийӗ паян ҫапла пӗлтернӗ: иртнӗ кун хушшинче Халӑх ҫарӗн тата Китай халӑх доброволецӗсен соединенийӗсем Паньмыньчжоньрен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре, Кымнынри районӗнче Америкӑпа Англи интервенчӗсене хирӗҫ хытӑ ҫапӑҫнӑ. Тӑшманӑн пӗр стрелковӑй полкӗ вуншар самолет тата 24 танк пулӑшнипе, Халӑх ҫарӗн позицийӗсене пӗр хутчен кӑна мар атакӑланӑ. Анчах Халӑх ҫарӗсем тӑшманӑн пур атакисене те сирсе янӑ. Халӑх ҫарне артиллери хытӑ пулӑшнӑ. Тӑшмана пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

Халӑх ҫарӗн артиллери чаҫӗсем Унчжинь ҫурмаутрав районӗнче ӗнер тӑшманӑн пӗр тральщикне шыва путарнӑ.

Халӑх ҫарӗн зенитнӑй чаҫӗсем тата самолетсене хирӗҫ кӗрешекен салтакӗсем паян тӑшманӑн 4 самолетне персе ӳкернӗ, 3 самолетне сиенленӗ. Вӑл самолетсем Демократиллӗ Корея Халӑх Республикинчи мирлӗ хуласемпе ялсем ҫине тискеррӗн бомбӑсем пӑрахнӑ тата пулеметсенчен пенӗ ҫӗре хутшӑннӑ пулнӑ.

Кӑнтӑр Корейӑри халӑх выҫӑпа асапланать

ПХЕНЬЯН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑри хаҫатсем Америка интервенчӗсемпе Ли Сын Манӑн сутӑнчӑкла шайкин пусмӑрӗнче пурӑнакан Кӑнтӑр Корейӑри халӑх пурнӑҫӗ ҫинчен материалсем пичетлеҫҫӗ. Хаҫатсем ҫапла ҫыраҫҫӗ: Кӑнтӑр Корея ҫӗнӗ, 1953 ҫула 1952 ҫулхинчен те йывӑртарах условисенче кӗтсе илнӗ.

«Нодон Синмун» хаҫат ҫапла ҫырать: темиҫе ҫул каярах, Америка оккупацилечӗчен, Кӑнтӑр Корея ҫӗршывӗн вӑйлӑ тырӑ пулакан вырӑнӗ пулнӑ, халӗ вӑл выҫлӑх крайӗ пулса тӑнӑ. Ӗҫлекенсем тата вӑрлӑх ҫитменнине пула, иртнӗ ҫулта кӑнтӑр енче акмалли ҫӗр лаптӑкӗн 55—61 процентне кӑна акса хӑварнӑ. Ли Сын Ман «правительстви» илекен налогсемпе хырҫӑ-марҫӑсене тӳлеме хресчен пухса кӗртекен тырпулӑн 82 проценчӗ каять. Юлашки тырра полицейскисемпе правительство чиновникӗсем хресченсене прӗксӗрлесе йӳнӗ хакпа влаҫсене суттараҫҫӗ.

Кӑнтӑр Корейӑри ӗҫсыннисем чӑтма ҫук йывӑр условисенче пурӑннине Кӑнтӑр Корейӑри хаҫатсен те йышӑнма тивет. «Чунан Синмун» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, Ҫурҫӗр Кенсан провинцийӗнчи хресченсем курӑк ҫисе пурӑнаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах Ли Сын Манӑн шайки Японие пиншер тонна рис ӑсатать. Кӑнтӑр Корейӑри «Ланбук Инхен» ятлӑ бюллетень ҫавна май ҫакна палӑртать: вӑрҫӑччен Корейӑран Японие, Америкӑн Корейӑри агрессийӗ пуҫланнӑ хыҫҫӑнхи вӑхӑтпа танлаштарсан, рис темиҫе хут сахалрах илсе кайнӑ.

Кӑнтӑр Корейӑри лару-тӑрӑва палӑртса, Кӑнтӑр Корейӑри «Чаю сеге» журнал ҫапла ҫырать: «Кӑнтӑр Корейӑра «хуласемпе ялсенче, пулӑҫсен поселокӗсенче тата сӑрт-тусем ҫинчи тӗттӗм ялсенче пурӑнакан ҫынсем пурте пурӑнма май ҫук тесе калаҫҫӗ».

Франци правительствин ҫӗнӗ составӗ

ПАРИЖ, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пӗлтернӗ тӑрӑх, Франци правительствин составне ҫаксем кӗнӗ: министрсен совечӗн председателӗ Рене Мейер (радикал), портфельсӗр министрсем: Анри Кэй (радикал), Поль Кост-Флорэ (МРП—халӑхӑн революциллӗ юхӑмӗн католикла партийӗ), Эдуард Боннфус (ЮДСР—пусмӑрлӑха хирӗҫ тӑракан демократиллӗ тата социалистла союзсем), ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министрӗ Жорж Бидо, (МРП) юстици министрӗ Леон Мартино-Депла (радикал), шалти ӗҫсен министрӗ Шарль Брюн (радикал), нациллӗ оборона министрӗ Рене Плевен, (ЮДСР), финанс министрӗ Морис Буржес-Монури (радикал) тата ыттисем те.

КАРАЧИРИ ЛАРУ-ТӐРУ

ЛОНДОН, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Лондонри радио пӗлтернӗ тӑрӑх, Карачи хулинче виҫҫӗмӗш кун ӗнтӗ пӑлханусем пулса иртеҫҫӗ. Паян каҫхине влаҫсен представителӗ ҫапла каланӑ: лару-тӑру пӗрмаях йывӑрланса пырать. Хулана ҫӗнӗрен ҫарсем илсе пынӑ. Вӗсем правительство учрежденийӗсене тата ют ҫӗршывсен посольствисене хураллаҫҫӗ.

Паян хулара чылай вырӑнсенче полици пӑшалсенчен пенӗ. Сахалтан та ултӑ ҫынна вӗлернӗ тата нумайӑшне амантнӑ тесе пӗлтереҫҫӗ. Хулан чылай районӗсенче урамсенче ҫулсем тата кантӑк ванчӑкӗсем выртаҫҫӗ. Хула варринчи урамсенче транспорт ҫӳремест.

Корейӑри ӗҫсыннисем И. В. Сталинӑн „СССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем“ ятлӑ произведенине вӗренеҫҫӗ

ПХЕНЬЯН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Корейӑри Ӗҫлӗх партийӗн парти шкулӗсенче И. В. Сталинӑн «СССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ гениллӗ произведенине тата КПСС XIX-мӗш съезчӗн материалӗсене анлӑн вӗренеҫҫӗ. Ҫак историллӗ документсене вӗренес ӗҫе мӗнпур институтсенче, ҫар училищисенче, Корейӑри Ӗҫлӗх партийӗн центрти тата провинцисенчи шкулӗсенче йӗркеленӗ. Промышленность предприятийӗсенчи, транспортри, учрежденисемпе шкулсенчи парти организацийӗсем тата ӗҫсынни массисем ыйтнипе шута илсе, XIX-мӗш съезд материалӗсемпе И. В. Сталин юлташӑн ҫӗнӗ произведенийӗ ҫинчен лекцисем вуласа параҫҫӗ.

Корейӑри ӗҫсыннисем И. В. Сталинӑн «СССР Союзӗнчи социализмӑн экономикӑллӑ проблемисем» ятлӑ ӗҫӗпе тата КПСС XIX-мӗш съезчӗн материалӗсемпе хытӑ интересленнине палӑртса, Корейӑри «Минчжу Чосон» хаҫат ҫапла ҫырать: И. В. Сталинӑн произведенийӗ тата XIX-мӗш съезд докуменчӗсем агрессорсене хирӗҫ кӗрешекен Корея халӑхне ҫӗнӗ вӑй парса тӑраҫҫӗ, унӑн ҫӗнтерес шанчӑкне тата ытларах ҫирӗплетеҫҫӗ. КПСС XIX-мӗш съезчӗн докуменчӗсем Корейӑри Ӗҫлӗх партийӗн членӗсене тата пӗтӗм Корея халӑхне пурнӑҫри аслӑ тӗллеве кӑтартаҫҫӗ. Совет халӑхӗ тӗнчери иккӗмӗш вӑрҫӑра мӗнле ҫӗнтерни, вӑрҫӑна пула сиен курнӑ хуҫалӑха мӗнле майпа юсани тата коммунизмӑн аслӑ строительствине мӗнле майпа ӑнӑҫлӑ туса пыни ҫинчен каласа параҫҫӗ. Корейӑри Ӗҫлӗх партийӗн Центральнӑй комитечӗн органӗ—«Нодон Синмун» хаҫат тата центральнӑй хаҫатсем И. В. Сталин юлташӑн произведенине тата КПСС XIX-мӗш съезчӗн материалӗсене вӗренес текенсене пулӑшма теориллӗ статьясем чылай пичетлеҫҫӗ.

Китай Халӑх Республики тунӑ ҫитӗнӳсем

ПЕКИН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). «Синьгуаньча» журнал ҫапла ҫырать: Китай халӑхӗ ҫӗнӗ Китай строительствин мӗнпур фрончӗсенче питӗ пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ. Тӗпрен илсен, ҫӗр реформине вӗҫленӗ. Ҫӗршыври рабочи класс производство заданийӗсене ирттерсе тултарнӑ. Пур ҫӗрте те вӑйлӑ тырпул пухса кӗртнӗ. Интеллигенцие идеологи тӗлӗшӗнчен воспитани парас ӗҫре пысӑк утӑм тунӑ.

Ҫак мӗнпур ҫитӗнӳсем, тесе ҫырать журнал, пирӗн ҫӗршыва индустриализацилеме май пачӗҫ. Экономика строительстви енӗпе 1952 ҫул юсав ӗҫӗсен тапхӑрӗн юлашки ҫулӗ пулнӑ. 1952 ҫулта халӑх хуҫалӑхӗнче промышленность производствин шайӗ чылай ӳснӗ. Китайри промышленность ӗлӗкрех потребительсем валли кӑна таварсем туса кӑларнӑ пулсан, халӗ вӑл производство хатӗрӗсем туса кӑларакан промышленность пулса тӑчӗ. 1952 ҫулта, 1949 ҫулхипе танлаштарсан, чугун, хурҫӑ тата хурҫӑ япаласем 11 хут ытларах туса кӑларнӑ. Ҫӗршыври заводсенче автоматла станоксемпе механизмсем вырнаҫтарса лартнӑ.

1952 ҫул ялхуҫалӑхӗшӗн те юсав тапхӑрне вӗҫлемелли ҫул пулнӑ. Иртнӗ ҫулта хресченсем пысӑк тухӑҫлӑ тырпул, ҫӗр мамӑкӗ тата улма-ҫырла туса илнӗ. Ку вӑл, чылай районсенче ҫанталӑк условийӗсем япӑх пулнӑ пулин те, пысӑк ҫитӗнӳ тунине пӗлтерет. 1952 ҫулта 1951 ҫулхинчен 15 процент ытларах тӗштырӑ пухса кӗртнӗ, тырпул тухӑҫлӑхӗ вӑрҫӑччен чи вӑйлӑ тырпул туса илнӗ вӑхӑтри шайран 9 процент иртсе кайнӑ.

1953 ҫул ҫӗнӗ Китай строительствинче, телейлӗ пурнӑҫ тӑвас ӗҫре, пирӗн ҫӗршывран империалистла агрессорсен темӗн тӗрлӗ чее ӗҫӗсене те сирсе яма пултаракан, хӑватлӑ держава туса хурас ҫӗрте халӑх ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвакан ҫул пулӗ.

Специалистсем вӗрентсе хатӗрлеҫҫӗ

ПЕКИН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). «Дунбэйжибао» хаҫат ҫапла пӗлтерет: иртнӗ ҫулта Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китайра технически шкулсем ҫиччӗ, ялхуҫалӑх шкулӗсем тӑваттӑ, медицина шкулӗсем тӑваттӑ тата финанспа экономикӑн тӑваттӑ аслӑ шкулне, педагогика шкулӗсем тӑваттӑ тата вырӑс чӗлхине вӗренмелли 2 шкул уҫнӑ. Унсӑр пуҫне, ҫӗнӗ университет, литературӑпа искусство институчӗ, ҫавӑн пекех вак халӑхсенчен кадрсем хатӗрлемелли институт уҫнӑ.

Ҫӗнӗрен уҫнӑ шкулсене ку вӗренӳ ҫулӗнче 6.635 студент вӗренме илнӗ. Ку вӑл ӗлӗкрех аслӑ шкулсене ҫулсерен вӗренме илнӗ студентсен хисепӗнчен икӗ хут ытларах пулать. Ҫурҫӗр-Хӗвелтухӑҫ Китайри технически аслӑ шкулсен хисепне ӳстернине пула вӑл шкулсенче вӗренекенсен хисепӗ, 1949 ҫулхипе танлаштарсан, 7 хут ытла ӳснӗ.

«Женьминьжибао» хаҫат пӗлтернӗ тӑрӑх, ту-сӑрт промышленноҫӗн Фушаньри управленийӗн предприятийӗсенче технически шкулсем нумай уҫнӑ. Вӑл шкулсенче рабочисем ӗҫленӗ вӑхӑтрах вӗренеҫҫӗ.

МОНГОЛИ ХАЛӐХӖН РЕВОЛЮЦИЛЛӖ ПАРТИЙӖН ЦЕНТРАЛЬНАЙ КОМИТЕЧӖ ЙЫШӐННӐ ПОСТАНОВЛЕНИ

УЛАН-БАТОР, январӗн 7-мӗшӗ. (ТАСС). Монголи халӑхӗн революциллӗ партийӗн Центральнӑй Комитечӗ Мочголи халӑхӗн ҫулпуҫӗ Чойбалсан маршал вилнӗренпе пӗр ҫул тултарнине паллӑ тӑвасси ҫинчен постановлени йышӑннӑ. Предприятисемпе учрежденисенче, шкулсенче, ҫар чаҫӗсенче, сомонсемпе багсенче Чойбалсанӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен докладсемпе калаҫусем ирттерме палӑртнӑ. Улан-Баторта тата аймак центрӗсенче хурлӑхлӑ ларусем пулса иртеҫҫӗ. Январӗн 26-мӗшӗнче Улан-Баторта Чойбалсан ӳтне хунӑ ҫурта тата Чойбалсан маршал музейне уҫаҫҫӗ.

Болгарире электропромышленность аталанни

СОФИЯ, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Болгарири электропромышленноҫа темиҫе ҫул каярах ҫеҫ тунӑ-ха. Ку промышленность ҫӗнӗ йышши продукци тума вӗренсе пырать. Ҫак кунсенче София хулинчи Василь Коларов ячӗпе тӑракан завод ҫӗршывра пӗрремӗш хут генератор туса кӑларнӑ. Генератор тата унӑн производстври технологийӗн чертежӗсене Болгарири инженерсем тунӑ. Генератора ҫӗршывра нумаях пулмасть туса лартнӑ электростанцисенчен пӗринче вырнаҫтарнӑ.

Нумаях пулмасть Русе хулинче туса лартнӑ электротехнически завод коллективӗ тӗрлӗрен изоляци материалӗсем туса кӑларма вӗренсе ҫитнӗ.

Демократиллӗ Германи Республикинчи общественность Некрасова хисеплесе асӑнать

БЕРЛИН, январӗн 8-мӗшӗ. (ТАСС). Берлинри демократиллӗ хаҫатсем вырӑссен аслӑ поэт-демократӗ Н. А. Некрасов вилнӗренпе 75 ҫул тултарнине анлӑн паллӑ тӑваҫҫӗ. «Трибюне», «Нейе Цейт», «Дер Морген» тата ытти хаҫатсен паянхи номерӗсенче аслӑ поэтӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен ҫырнӑ пысӑк статьясем пичетленӗ.

«Нейес Дейчланд» хаҫатра «Революциллӗ демократи поэчӗ» ятлӑ статья пичетленнӗ. Вӑл статьяра ҫапла каланӑ: Николай Алексеевич Некрасов—XIX-мӗш ӗмӗрти питӗ паллӑ поэт-демократсенчен пӗри. Некрасов произведенийӗсен содержанийӗ вӑл халӑхӑн телейӗпе ырӑ пурнӑҫӗшӗн пыракан кӗрешӳ. Поэт ҫак кӗрешӳ майлӑ пулса хайӗн пӗтӗм вӑйне, хайӗн пӗтӗм талантне панӑ.

Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци, тенӗ юлашкинчен статьяра, Некрасов ӗмӗтне пурнӑҫа кӗртрӗ. Вырӑс халӑхӗ самодержавин сӑнчӑрӗсене татса ывӑтрӗ, телейлӗ пурнӑҫ тума пултарчӗ.

Индире Америка пропагандине хирӗҫ тӑраҫҫӗ

ДЕЛИ, январӗн 9-мӗшӗ. (ТАСС). Индири патриотсем хайсен ҫӗршывне «педагогсем», «профессорсем», «экспертсем» пек пулса Америка агенчӗсем питӗ йышлӑн пынине хирӗҫ протестлеҫҫӗ.

Патна хулинче хинди чӗлхипе кашни кун тухса тӑракан «Навараштра» хаҫат ҫапла пӗлтернӗ: январӗн 6-мӗшӗнче Патнара Америка «философӗ», Сан-Франциско университечӗн профессорӗ Альфред Фиск вырӑнти колледжри профессорсемпе студентсем валли лекци вуласа парасси ҫинчен пӗлтернӗ. Фиск «философ» научнӑй лекци вырӑнне Совет Союзӗ ҫинчен элеклӗ сӑмахсем калама тата Америкӑри пурнӑҫа мухтама тытӑнсан, лекци итлеме пухӑннӑ ҫынсем хытӑ тарӑхнӑ.

Залри ҫынсем «лекци» хыҫҫӑн Фиска питӗ нумай ыйтусем панӑ: «США-ра ирӗклӗх пур-и?», «Ҫакна калӑр: Сирӗн ҫӗршыври негрсене хӗсӗрлемелли меслетсем Америка демократийӗн символӗ пулса тӑраҫҫӗ пулмалла?», «Мирлӗ вӑхӑтра вассака хӗспӑшал хатӗрлемесӗр Пӗрлешӳллӗ Штатсем мӗнле майпа экономикӑллӑ кризисран хӑтӑлма пултараҫҫӗ?» тата ыттисем те.

Аптраса ӳкнӗ Фиск хайне панӑ ыйтусем ҫине нимӗнле ответ та пама пултарайман.

Лекци вӑхӑтӗнче председатель пулса ертсе пыракан Балдео Сахан юлашкинчен ҫапла каланӑ: «Эпӗ коммунист мар пулин те, ҫакна палӑртас тетӗп: Америка ораторӗсем Индири хальхи вӑхӑтри шухӑш-кӑмӑлсене ӑнланма пултараймаҫҫӗ».

«Навараштра» хаҫат ҫакна паллӑ тӑвать: итлеме пынӑ ҫынсем «лекцирен» кайнӑ хыҫҫӑн ҫакӑн пек требовани лартнӑ: Америка пропагандине, ӑна философи профессорӗсем туса пыраҫҫӗ пулсан та, чармалла.

Д. З. Захаров

Йывӑр чирленӗ хыҫҫӑн 1953 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗнче Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи главнӑй арбитр Дмитрий Захарович Захаров вилнӗ.

Д. З. Захаров юлташ 1888 ҫулта, вӑтам хресчен ҫемйинче, Чӑваш АССР-ӗнчи Комсомольски районӗнчи Тури Тимӗрҫкасси ялӗнче ҫуралнӑ.

1917 ҫулхи июль уйӑхӗнче Коммунистсен партийӗн ретне кӗрсе, Д. З. Захаров юлташ хайӗн пӗтӗм вӑйне, пӗлӗвне, опытне совет халӑхӗн коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешес ӗҫне панӑ. Вӑл Чӑваш АССР-ӗнчи партипе совет органӗсенче чылай ертсе пыракан вырӑнсенче ӗҫленӗ — волость, уезд, район исполкомӗсен председателӗ, Чӑваш АССР Социальнӑй обеспечени Халӑх комиссарӗ, ВКП(б) ОКК—РКИ председателӗ. Д. З. Захаров юлташа темиҫе хутчен те Чӑваш АССР Тӗпӗҫтӑвкомӗн членне суйланӑ. 1925—27 ҫулсенче СССР Тӗпӗҫтӑвкомӗн членӗ пулнӑ. 1940 ҫултан пуҫласа Д. З. Захаров юлташ Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи Госарбитражра малтан заместитель, 1943 ҫултан пуҫласа Главнӑй арбитр пулса ӗҫленӗ.

Парти кирек хӑш вырӑнта ӗҫлеме уйӑрса лартсан та, Захаров юлташ пур ҫӗрте те Ленин—Сталин партийӗн аслӑ ятне тӳрре кӑларнӑ, хайӗн ӗҫне пӗлсе туса пынӑ.

Д. З. Захаров юлташӑн ҫутӑ ячӗ Чӑваш республикинчи ӗҫсыннисен чӗринче нумайччен асра юлӗ.

ЮЛТАШӖСЕН УШКӐНӖ.

Республикӑри шахмат чемпионатӗнче

Республикӑри шахмат чемпионачӗ малалла пырать. Тӑххӑрмӗш вӑйӑра Никитин Егоровран выляса илчӗ. Ҫапла вара вӑл республика чемпионӗнчен Сергиевскирен пӗр очко ытларах илме пултарчӗ, турнирта малта пыраканни пулчӗ. Сергиевскипе Гуляев хушшинчи вӑйӑ никам ҫӗнтерейменнипе вӗҫленчӗ. Смирнов, Яковлевран выляса илсе, республика чемпионӗпе танлашрӗ. П. Федоров, Дерягинран выляса илсе, 6,5 очкона ҫитерчӗ, (9 очкоран), тӑваттӑмӗш вырӑна тухрӗ.

Вуннӑмӗш вӑйӑра Никитинпа Яснопольский хушшинчи вӑйӑ пурне те интереслентерчӗ. Анчах вӑйӑ ҫамрӑк шахматистӑн Яснопольскишӗн ӑнӑҫлӑ пулмарӗ. Малтан ӑнӑҫлӑ выляре пулин те, вӑл пӗр фигурӑна тӗрӗс мар куҫарса йӑнӑш турӗ, парӑнчӗ.

Ҫак вӑйӑра Сергиевский Дерягинран выляса илчӗ. П. Федоров виҫҫӗмӗш вырӑна тухма пултарчӗ.

Вун пӗрмӗш вӑйӑ республика чемпионӗ кам пулассине палӑртма май пачӗ. Сергиевский Смирнова малтанхи хут выляса ячӗ, Никитин В. Федоровран выляса илчӗ. Ҫапла вара Никитин республика чемпионӗ ятне илес шанӑҫ ӳсрӗ.

Вун пӗр вӑйӑ хыҫҫӑн Никитинӑн 10 очко, П. Федоровӑн — 8,5, Сергиевскипе Смирновӑн — 8-шар, Соловьевпа Яснопольскин — 6,5-шер, Сиротинӑн — 5,5 Гуляевпа В. Федоровӑн — 5-шер, Егоровӑн — 4,5, Дерягинпа Романовӑн — 4-шар, Кочетовпа Яковлевӑн — 3,5-шер, Николаевӑн — 3, Андреевӑн — 2,5.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Шупашкарти тата республикӑри кинотеатрсенче Польшӑра ӳкернӗ

„Первые дни“

ятлӑ ҫӗнӗ илемлӗ фильм кӑтартма пуҫлаҫҫӗ.

Ҫак кинофильма Б. Хамера ҫырнӑ «По примеру Плевы» ятлӑ повесть тӑрӑх ӳкернӗ.

Сценари авторӗ — Б. Хамера.
Композитор — К. Сикорский.

Польшӑри илемлӗ фильмсем ӳкерекен государство студийӗ Лодзь хулинче ӳкернӗ.

Экрансем ҫине «Главкинопрокатӑн» Чӑваш республикинчи кантурӗ кӑларать.

ЧӐВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРӖНЧЕ

Паян, январӗн 11-мӗшӗнче, ирхине те, каҫхине те вырӑсла спектакль
«ДЕВИЦЫ-КРАСАВИЦЫ»

Ыран, январӗн 12-мӗшӗнче, чӑвашла спектакль
«НАЗАР СТОДОЛЯ»

Ытларикун, январӗн 13-мӗшӗнче, чӑвашла спектакль
«ЯЛТА»

Кӑнтӑрлахи спектакльсем 12 сехетре, каҫхи спектакльсем 20 сехетре пуҫланаҫҫӗ.

КПСС Шупашкар хула комитечӗ Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗ ҫумӗнчи главнӑй арбитр, 1917 ҫулхи июль уйӑхӗнчен КПСС членӗнче тӑнӑ

Дмитрий Захарович ЗАХАРОВ

йывӑр чирлесе выртнӑ хыҫҫӑн 1953 ҫулхи январӗн 9-мӗшӗнче вилни ҫинчен тата унӑн ҫемйипе пӗрле хурланни ҫинчен пӗлтерет.

РЕДАКЦИ АДРЕСӖ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителӗ—3-99, ответлӑ секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайӗ—5-74, информаци пайӗ—5-74, парти пурнӑҫ пайӗ—3-99, ялхуҫалӑх пайӗ—3-97, культура пайӗ—8-61, совет строительстви пайӗ—8-61, ҫырусен пайӗ 7-32, издательство кантурӗ—0-23.

НТ 00917 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.